КАПКĂН БИБЛИОТЕКИ

№



Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИ
Матвей САКМАРОВ
Анатолий ЮМАН

# ĂШХЫПТАРМĂШСЕМ

к С(чув)
Д13
30756-чув
Давыдов-Анатрив.
Ăш хыптармăшсем.
19..

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

«КАПКАН БИБЛИОТЕКИ» 4 (73) №

Д 13

Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИ
Матвей САКМАРОВ
Анатолий ЮМАН

# ӐШХЫПТАРМӐШСЕМ

Калавсем
Сӑвӑсем
Шӳтсем
Пьесӑсем

ПРОВЕРЕНО
20 08

30456 гув

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

Анатолий БЫКОВ ӳкерчӗкӗсем

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

КПСС Чӑваш обкомӗн издательстви
Шупашкар — 1986



# Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИ

Давыдов-Анатри тесен, Василий Иванович темесĕрех аван пĕлеççĕ ăна республикăра. Вăл пирĕн, чăвашла-вырăсла каласан — паллă лирик, паллă песенник, паллă сатирик. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна Чăваш АССР тата РСФСР культурисен тава тивĕçлĕ ĕçченĕн ятне панă. Анчах çак чыса çитиччен малтан, 1917-мĕш çулта, Патăръел районĕнчи Аслă Арапуç ялĕнче çуралма тивнĕ-ха унăн, пайтах çăпата-пушмак çĕтме, пайтах шурă хут хуратма лекнĕ. Çапах çăпатине те усăсăр çĕтмен вăл, хутне те усăсăр хуратман. Лирикăллă юрăсăвăсем шăрантарнă вăхăтрах пурнăçа каялла туртма хăтланакан элес-мелессене хирĕç те сассине çĕкленĕ. Халĕ те вĕсемпе вăй çитнĕ таран кĕрешет. Сасси унăн усăмлă та янăравлă, чунĕ — çулăмлă та кăварлă. Ан тив, çак хĕрӳ çулăм пурнăç каяшĕсене ĕнтсе-çунтарсах тăтăр.

# УКÇА

— Çухалчĕ, пĕтрĕ! — кăшкăрса ячĕ Калля, арăмĕн куçĕнчен шăтарас пек пăхса.

— Мĕн çухалчĕ, мĕн пĕтрĕ? — хуллен кăна ыйтрĕ Ульха.

— Укçа! Леш, хир енне кайса тунă укçа!

Пуçланчĕ хайхи: Калляпа Ульха ниçта кайса кĕме пĕлмеççĕ, айăн-çийĕн çавăраççĕ.

— Ăçта хунăччĕ вара эс ăна? — ыйтрĕ Калляран Ульха.

— Ниçта та мар, çакăнтахчĕ: сентре çине хунăччĕ, — хыпăнчĕ Калля, пӳрт стенисене аллисемпе хыпашласа. Ульха та пукан çине сиксе хăпарчĕ, сентрери япаласене пăтрата пуçларĕ.

— Эх, эсĕ!.. Пурăна-киле пуçна та çухатăн-ха, — терĕ вăл Калляна.

— Ан лăрка-ха. Сăмах ун çинчен мар, укçа ăçта кайса кĕни çинчен пырать, — пат татса каларĕ Калля.

Укçа хуйхи Калляпа Ульхана çĕрле те канăç памарĕ.

— Çук, Калля, тем тесен те, пирĕн пата вăрă килсе кĕнĕ, юмăça каймалла, — терĕ Ульха кинемей. Калля та арăмĕн шухăшĕпе килĕшрĕ.

Ирхине вара, шуçăм çути киличчененех, Ульха кинемей кӳршĕ яла, Укахви-юмăç патне, тухса вĕçтерчĕ.

— Пирĕн çурта инкек килсе кĕчĕ. Укçа çухалчĕ, — пĕлтерчĕ вăл юмăç карчăка.

— Тытăс пулать ăна. Эсĕ ман пата килни питĕ лайăх. Тĕпелелле иртсе лар, — сĕнчĕ ăна пĕкĕ пек авăнса ларнă юмăç. Пăртакран вăл, хуралса-якалса кайнă туйине тытса, пуçне çĕтĕк кĕрĕкпе хупларĕ те мăкăртата пуçларĕ:

— Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ çырма, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ çырмара çитмĕл те çичĕ тĕслĕ чул. Эй, асамçă, çак çитмĕл çичĕ тĕслĕ чул хушшинчен тухса, укçа вăррине тытма пулăшсамччĕ, хăвăн хăватна кăтартсамччĕ...

Чылайччен çапла мăкăртатрĕ юмăç карчăк. Унтан, пуçĕ çинчи кĕрĕкне сирсе пăрахса, тарланă çамкине кĕпе çаннипе шăла-шăла илчĕ те:

— Сирĕн киле вăрă инçетрен пыман. Вăл — хăвăр кӳршĕренех, вăрăмрах, хурарах çын, — тесе хучĕ.

— Çавах, çавах, Мирун, Мирун! Укçа çухалнă кун та пирĕн пата пынăччĕ. Мур илесшĕ, çĕр çăтманĕ! — çуйхаша пуçларĕ Ульха.

Юмăç карчăк ăна лăплантарнă пекки турĕ:

— Эсĕ, йăмăкăм, — терĕ вăл çемçен, — питех хуçăлса ан ӳкха. Малтан çав Мирун текен çыннăн хапхи умне укçа кайса пăрах. Укçа вăрри вăлах пулсан, ăна тепĕр куннех вĕри чир çапса ӳкерĕ.

Ульха тăхтаса тăмарĕ, юмăç карчăк хушнине çав кунах пурнăçларĕ: Мирун хапхи умне укçа кайса пăрахрĕ. Укçине пăрахнă чух Мирун килĕнче пулман, вăл Канаша ĕçпе кайнă-мĕн. Çул çинче çумăр айне лекнĕ. Сивĕ çумăр, паллах, ырă тумасть ĕнтĕ. Вăл хуларан таврăнсанах вĕриленсе ӳкрĕ, тухтăра та киле чĕнме тиврĕ.

— Шăнса пăсăлнă, — кĕскен пĕлтерчĕ лешĕ итлекелесе пăхнă хыççăн. — Ӳпки хавшанă...

Мирун чирлесе ӳкнине илтсен, Ульха пушшех урса кайрĕ.

— Юмăç калани чăн пулчĕ, — янрашрĕ вăл чунтан. — Пирĕн укçана пĕçертнĕ çынна турă хĕн-хур кăтартма та тытăнчĕ!

Ульха тӳсеймерĕ — Мирунсем патне чупса каçрĕ.

— Мĕн хăтланатăн эс, кӳршĕ? Пире çаратма шут тытрăн-и, кĕç-çе пит?! — терĕ Ульха Мирун выртакан пӳлĕме кĕнĕ-кĕмен. Мирун нимĕн те ăнланмарĕ, йывăррăн сывласа илчĕ:

— Ульха кинĕм, эсĕ мĕнле укçа çинчен калаçатăн çак? Кам, мĕн вăрланă? — ыйтрĕ вăл аран-аран. Лешĕ вара ун сăмахне хăлхана та чикмерĕ.

— Эсĕ, урăх никам та мар. Юмăç карчăк та сан çинех каларĕ,— терĕ вăл. Мирун, аран сывлаканскер, пушшех аптăраса ӳкрĕ, хăй айăпсăр иккенне ăнлантарма тăрăшрĕ. Çук, Ульха аллине çеç сулчĕ:

— Каçармастпăр эпир сана, темле пулсан та, каçармастпăр! — кăшкăрчĕ вăл. — Халех милицие кайса евитлетпĕр. Пĕтĕм тĕнче пĕлтĕр!

Ульха, килсе кĕнĕ пекех, хăвăрт тухса çухалчĕ.

Укçа хыпарĕ яла хăвăрт саланчĕ. Çынсем Калляпа Ульхана шухăшпа та, ĕçпе те пулăшма тăрăшрĕç, анчах усси пулмарĕ, икĕ кун иртрĕ, çухалнă укçа пурпĕр тупăнмарĕ.

Виççĕмĕш каçхине те Калляпа Ульха çухату çинченех пуплерĕç. Çур çĕр те çитрĕ çапла. Автансем те авăтма тытăнчĕç. Ыйхă пуснине кура Ульха вырăн сарма шутларĕ, çӳпçе тĕпĕнчен халиччен тытман вырăн çиттине кăларчĕ. Унччен те пулмарĕ, çĕре çат! ӳкрĕ темĕскер.

— Укçа! Укçа! — кăшкăрса ячĕ Ульха. Калли, арăмĕн аллинчи укçа хутаççине курсан, пĕрре хĕрелсе, тепре шуралса кайрĕ.

— Мĕнле, ăçтан сиксе тухрĕ ку телей капла? — тĕлĕнчĕ вăл, укçа хутаççине кăкăрĕ çумне хаваслăн чăмăртаса. — Эх, çакă ĕнтĕ вăл пурăнăç!

— Калля, эсĕ савăнни аван-ха та... — шиклĕн сăмах хушрĕ ăна Ульха. — Анчах ман ăçта кайса кĕмелле? Намăс-çке! Укçа çӳпçе тĕпĕнчех, вырăн çитти хушшинчех, выртнă!..

# КУРШАНАК

Куяновпа Ятманов ларакан пӳлĕме сарлака хулпуççиллĕ, лайăх тумлă хĕрарăм пырса кĕчĕ. Вăл аллинчи ридикюльне сĕтел çинелле ывăтрĕ те телефон трубкине ярса илчĕ.

— Ку филармони пулчĕ-и? Кам телефон умĕнче? Мĕнле ĕçре эс унта? — ыйтрĕ вăл, сăмахсене уçăмлăн янăраттарса. — Нивушлĕ этем ĕретлĕ калаçма çук? Чĕлхӳне шĕкĕ шăтарса пĕтерчĕ-им?

Хĕрарăм мĕншĕн тарăхнине эпир ăнланаймарăмăр. Вăл çуйхашнă вăхăтра манăн юлташ Ятманов çумне пырса ларчĕ.

— Кам ку? — ыйтрĕ вăл, хĕрарăм еннелле пуçĕпе сĕлтсе. — Пĕр-пĕр министерствăран е главкăран килнĕ çын мар-и? Шутсăр хытă тустарать-çке?

Ятманов ытлашши шухăшласа тăмарĕ:

— Вăл — пирĕн куршанак, — тесе хучĕ.

Эпир çак «куршанак» сăмах мĕне пĕлтерните ниепле те тавçăрса илеймерĕмĕр. Хĕрарăм халтан кайиччен кăшкăрашнă хыççăн Ятманов сĕтелĕ патне пырса ларчĕ. Вĕсем вара иккĕшĕ питех те ăшшăн литературăпа искусство çинчен сăмахла пуçларĕç.

Малтанлăха калаçу йĕркеллех пычĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, хĕрарăм пукан çинчен сасартăк сиксе тăчĕ:

— Тăмсай эсĕ! — кăшкăрса пăрахрĕ вăл Ятманова. — Нимĕн те пĕлместĕн, нимĕн те чухламастăн!

Чипер калаçса ларакан Ятманов шартах сикрĕ, пĕрре хĕрелсе, тепре шуралса кайрĕ. Анчах пĕр сăмах та чĕнмерĕ, аллине сулчĕ те... нимĕн тума аптăранипе умĕнчи хут куписене пăлхатма тытăнчĕ.

Хĕрарăм çаплах чарăнмарĕ:

— Эпĕ... эпĕ, — терĕ вăл куçне чалăштарса, — Чайковский... «Пиковая дама»...

— Э, ку... литературăпа искусство енĕпе ĕçлекен çын пулĕ-ха, — тĕлĕнчĕ ман юлташ.

Хĕрарăм лăпланмарĕ-ха çаплах. Ятманов сăмах чĕнме те хăю çитереймерĕ ăна.

— Ху эсĕ Бородинăн «Мазепа» оперине те курман пуль-ха... О, Бизе! Бизе! — çаплах хăлаçланчĕ хĕрарăм.

Ятманов чăтаймарĕ:

— «Мазепăна» Бородин мар, Чайковский çырнă, — терĕ.

Ятманов тӳрлетсе калани хĕрарăм кăмăлне пăсмаллипех пăсса пăрахрĕ, Вăл Ятманов еннелле çаврăнчĕ те:

— Сан мана вĕрентме çĕр пăт тăвар çиес пулать-ха, — тесе хучĕ.

Ятманов шарламарĕ, аллă çултан иртнĕскер, хăйĕн шурала пуçланă çӳçне çеç шăлкаласа илчĕ.

Хĕрарăм кăшкăрашнă вăхăтра пӳлĕме Куянов пырса кĕчĕ. Куянов — ятлă-шывлă çын. Вăл сăвăсем çеç мар, калавсем те çыркалать. Хĕрарăм, Куянова лайăх пĕлекенскер, унпа ăшă калаçу пуçласа ячĕ. Эпир хăлхасене тăратсах итлеме пикентĕмĕр.

Унччен те пулмарĕ, тимлесех итлесе ларакан юлташăм мана аяк пĕрчинчен пӳрни вĕçĕпе чак! тăрăнтарчĕ.

— Ха, ку хĕрарăм мĕн сӳпĕлтетет! — терĕ вăл, пуçне калаçакансем еннелле сулса. — Пурне те хурлать, хăйне çеç ылтăн вырăнне хурать.

— Лар, ан шавла, итле, — сĕнтĕм ăна. — Йĕркеллĕ пул.

Хĕрарăмпа Куянов хушшинчи калаçу малаллах пычĕ-ха.

— Да, — терĕ хĕрарăм, — Ухсай Яккăвĕ çав «Аптраман таврашĕ» поэмипех чапа тухрĕ. Вăл пулман пулсан...

— Çук, Луиска, «Аптраман таврашне» Ухсай мар, Хусанкай çырнă, — çиййĕнчех тӳрлетрĕ Куянов. Тем пулчĕ, хĕрарăм ăна хирĕç нимĕн те шарламарĕ.

— Паян театра каяссăн-ха, — хушса хучĕ вăл вара. — «Пугачев парни» пăхассăн. Айзман çырнă пьесăсене курманни нумай пулать...

— Йăнăшатăр, Луиска, «Пугачев парнине» Айзман мар, Максимов-Кошкинский çырнă, — каллех тӳрлетрĕ Куянов.

Манăн юлташ лăплана пуçланăччĕ. Çакна илтсен, вĕриленнипе каллех ун-кун пăхкалама тытăнчĕ. Эпĕ, хирĕçӳ сиксе ан тухтăр тесе, ăна урама ертсе тухрăм. Утсан-утсан, çула май тенĕ пек, хула-

ри пӗр универмага кӗтӗмӗр. Магазинра халӑх туллиех. Пӗрисем пусма-тавар, теприсем хуҫалӑхра кирлӗ япаласем туянаҫҫӗ. Ак, тамаша... Мана юлташ каллех аяк пӗрчинчен тӗртрӗ.

— Куратӑн-и, ав, хайхи куршанак, — терӗ вӑл, халӑх кӗпӗрленнӗ еннелле аллине сулса. — Пӑхрӑм та, тӗлӗнсех кайрӑм. Чӑнах та, хайхи хӗрарӑм, Луиска текенскер, тавар туянакан ҫыноене сире-сире малалла хирӗнет. Хӑй аякранах: — Мана симӗс шлепке парӑр! Халех! Ман вӑхӑт ҫук! — тесе кӑшкӑрать.

— Вӑт пулать те этем: хӑй те шлепке... тата шлепке туянать,— мӑкӑртатрӗ ман юлташ, йӳҫҫӗн кулкаласа.

Луиска эпир хӗрсе калаҫнине курчӗ пулас, хӑвӑрт кӑна пирӗн пата утса пычӗ те:

— Мӗн эсир ман ҫине пӑхса калаҫатӑр? — терӗ, куҫран хурчӑка пек тинкерсе. — Мӗн кирлӗ сире, ӑҫта ӗҫлетӗр, камсем эсир?

Эпир пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илтӗмӗр те магазинран пичӗке пӑкки пек тапса тухрӑмӑр. Ара, куршанак, пӗр ҫыпҫӑнсан, ҫыпӑҫса лармах пултарать-ҫке.

# ПӖР ҪАМАНТРАХ...

Хулари пӗр пысӑк столовӑй заведующийӗ Семен Сергеевич Ситников ҫуралнӑранпа аллӑ ҫул тултарчӗ. Ҫав ятпа хаваслӑ каҫ пулса иртрӗ. Манӑн та унта пулма тӗл килчӗ. Эпир Семен Сергеевича, унӑн мӑшӑрне, ачисене ырлӑх-сывлӑх сунса, пӗрин хыҫҫӑн тепри сӑмах каларӑмӑр. «Хисеплӗ Семен Сергеевич, сана тата ҫӗр ҫул пурӑнма ҫирӗп сывлӑх сунатпӑр», — терӗмӗр. Пӑртакран ман ҫумра ларакан Иван Михайлович Ухтеринов та сӑмах калама шут тытрӗ. Вӑл Семен Сергеевич патне васкавлӑн утса пычӗ те:

— Ҫывӑхран та ҫывӑх ҫыннӑм, Семен Сергеевич, — терӗ, аллине кӑкӑрӗ ҫине хурса, — эсӗ яланах пирӗншӗн ҫут хӗвел пек ялкӑшса, ҫиҫсе тӑратӑн... Сана пуриншӗн те пӗтӗм чун-вартан тав тӑватӑп. Вилӗм ҫинчен нихӑҫан та ан шутла: аслӑ ҫӗр ҫинче пурне те вырӑн ҫитет...

Ухтеринов вара Семен Сергеевича парне — ҫухипе ҫанни вӗҫӗсене тӗрленӗ кӗпе тыттарчӗ те каллех ман ҫумма пырса ларчӗ.

Ура ҫине Петр Матвеевич Мылов сиксе тӑчӗ.

— Семен Сергеевич, — терӗ вӑл лӑпкӑн, — эпӗ сана хама кулленхи ӗҫре пулӑшса пынӑшӑн тав тӑватӑп...

Мылов малалла мӗн каланине эпӗ илтсе юлаймарӑм, ман сылтӑм хӑлха патнелле хайхи Ухтеринов хӑйӗн ҫӳхе тутине тӑсрӗ те:

— Ха, мӗн хӑтланать Петр Матвеевич, мур илесшӗ, кунӗн-ҫӗрӗн Семен Сергеевич хӳттинче рехетленсе пурӑнать те епле мухтать ӑна, — тесе хучӗ.

Эпӗ чӑтаймарӑм, пӗрре хурланнипе, тепре тарӑхнипе ахӑлтатсах кулса ятӑм. Ҫав вӑхӑтра ман хӑлхара Иван Михайлович халь

çеç каланă «çунатлă» сăмахсем янăраса тăчĕç, вăл Семен Сергеевича тыттарнă парне — тĕрленĕ пурçăн кĕпе — куç умне тухса тăчĕ. Ку çеç-и, хăйĕн сăнне пин хут улăштарма пултаракан çын ларни те çав самантрах курăнчĕ!

# САН ĔÇŸ МАР...

Павăл пÿртре ĕçлесе ларакан ашшĕ патне васкавлăн пырса кĕчĕ.

— Атте, — терĕ вăл татăклăн, — эпĕ авланатăп.
— Иртерех мар-и? — ыйтрĕ ашшĕ.
— Вăл сан ĕçÿ мар, — кÿренчĕ Павăл.
— Аçта пурăнăн, мĕн çийĕн, ачам? — ыйтрĕ каллех ашшĕ.
— Ку вара йăлтах сан ĕçÿ, — терĕ те Павăл пÿртрен васкаса тухса кайрĕ. Ашшĕ Павăла ним калама аптăраса пăхса юлчĕ.

# ИКĔ УСĂЛЛĂ ĔÇ

Ефимкин артист районти пĕр колхозра концерт панă. Концерт курма пынă çынсем программăна питех те юратса тăнланă. Уйрăмах вĕсем пĕр паллă юптаруçăн «Аншарли мыскари» сăввине килĕштернĕ. Урăхла пулма та пултарайман: ку юптару аншарли юхтаракан, ăна сутса пуйма ĕмĕтленекен çынсене хытă питлет. Концерт пĕтсен, артист культура çуртĕнчен тухнă та хваттер еннелле васканă. Концерт лайăх иртнишĕн савăнса пынă вăл. Унччен те пулман, хăлха çуммипе темĕн вăркăнса иртнĕ. Ваш! çаврăннă артист. Курах кайнă хăйĕнчен инçех те мар тăракан хĕрарăма.

— Эс петĕн-и мана? — ыйтнă вăл унран.

— Эпĕ, — тунман хĕрарăм.

— Мĕншĕн?

— Манран мăшкăлланăшăн.

— Хăçан мăшкăлланă эп санран?

— Концертра.

— Мĕн тесе?

— Сăмакун юхтарса сутатăн тесе.

— А-а, эс апла сăмакун юхтаратăн-и-ха?

— Çук... эп... мĕн...

— Ну-кă, атя, ут манпа пĕрле.

— Аçта?

— Участковăй патне!..

...Сăмакунçăна тупма пулăшнăшăн, милиционер артиста чунтан тав тунă:

— Маттур, — тенĕ вăл ăна, алă тытса, — кĕçĕр эсир икĕ усăллă ĕç турăр...

# АРПУС

Пусма-тавар сутакан магазина пӗр ҫамрӑк хӗрарӑм ситсе кӗчӗ. Вӑл йӗри-тавра пӑхса ҫаврӑнчӗ те, сутуҫӑ патне пырса тӑчӗ. Ун куҫӗ умне хӗп-хӗрлӗ, сип-симӗс пурҫӑн сатин тӗркисем туха-туха тӑчӗҫ.

— Мӗн ку? — ыйтрӗ вӑл сутуҫӑран.

— Ҫитсӑ, — терӗ лешӗ.

— Мӗн ку? — ыйтрӗ каллех хӗрарӑм.

— Каларӑм-ҫке ҫитсӑ тесе! — таврӑнчӗ сутакан.

— Мӗн ку? — чарӑнмарӗ ҫаплах хӗрарӑм.

Сутуҫӑ тӳссе тӑраймарӗ:

— Арпус! — тесе хучӗ.

# ЭХ, МӐНУКӐМ...

Пирӗн асанне хӑйӗн мӑнукӗсене ҫав тери хисеплет, ҫав тери юратать. Вӑл яланах пире: эх, мӑнукӑмсем, ылтӑнӑмсем, тет.

Асанне уйрӑмах пӗчӗк шӑллӑма Ҫеркее юратать. Ҫеркей ӑна сисет, яланах асанне умӗнче ачашланма пӑхать.

Пӗр ирхине асаннепе Ҫеркей апат ҫисе ларӑҫҫӗ.

— Ҫи, ачам, ҫи, пепкем. Кунта акӑ, ҫӑкӑр та, чӑкӑт та, ҫу та пур, — тет асанне.

— Ҫук, ҫиес килмест, — турткаланать Ҫеркей.

— Ҫи ӗнтӗ, ҫи! Кун пек тутлӑ апата эпир ӗлӗкхи вӑхӑтра тӗлӗкре те курман, — ӳкӗтлет асанне ҫаплах.

Ҫеркей пуҫне ялтах ҫӗклет:

— Ав, мӗнле лайӑх пулнӑ ун чухне сире! — тет вӑл ҫӗнтерӳллӗн. — Хальхи пек никам та ирӗксӗр апат ҫитермен!

# ҪЫРӐНМАЛЛАХ ПУЛЬ...

Пӗр ҫамрӑк ҫыравҫӑ журнал редакторӗ патне кӗрсе тӑчӗ те:

— Эпӗ пилӗк уйӑх каяллах сирӗн журнала калав парса хӑварнӑччӗ, — терӗ кӳренчӗклӗн. — Анчах темшӗн пичетленсе тухмарӗ.

— Ҫамрӑк тусӑм, мӗн калаҫатӑн эсӗ, — тӗлӗнчӗ редактор, журнала уҫса. — Калаву тахҫанах пичетленсе тухрӗ. Акӑ вӑл, кур.

Ҫамрӑк юлташ аванмарланса хӗрелсе кайрӗ. Вӑл, редактор пӳлӗмӗнчен тухса, почта еннелле уттарчӗ. «Ку журнала ҫырӑнмаллах пулать пуль, — ӗнсине кӑтӑрт-кӑтӑрт хыҫрӗ хӑй. — Капла хамӑн чаплӑ произведенисене курмасӑр та юлӑп...»

# КАЛЛЯ ПИЧЧЕ КУЛТАРАТЬ

Пирĕн ялта Калля пичче пурăнать. Вăл ватă ĕнтĕ, анчах шӳт тума пултарать-ха. Эпир, ялти çамрăксем, кăçал ăна пăртак кӳрентертĕмĕр. Вăл пире хăйĕн авалхи йывăр пурнăçĕ çинчен, клуба пырса, каласа пама пулнăччĕ. Анчах мĕн тăвăн ватă çынна: темиçе хут чĕнсен те пымарĕ. Пĕрре эпир ун патне килне кайма шут тытрăмăр. Калля пичче ун чух пахчинчи çурхи шыва уçса тăратчĕ. Вăл пире курчĕ те çатан карта çумне пырса тăчĕ.

— Ну, Калля пичче, паян, клуба пырса, пире ху пурнăçу çинчен каласа памасан, каçармастпăрах, — терĕмĕр эпир пăртак кулараххăн.

Калля пичче сар сухалне шăлкаласа илчĕ те:

— Мĕн тăвăн ĕнтĕ сире, каçармастăр пулсан, карта ку енчех тăрăп, — тесе хучĕ.

Эпир «каçармастпăр» сăмаха тĕрĕс мар персе янине çийĕнчех ăнлантăмăр вара.

# ПĔРЛЕ ХУШСА ШУТЛАСАН...

Санюк шкултан хаваслăн таврăнчĕ.

— Асатте, паян савăн ĕнтĕ, — терĕ вăл пӳрте кĕнĕ-кĕмен. — Сан валли «улттă» паллă илсе килтĕм!

— Мĕнле «улттă» паллă вăл? — тĕлĕнчĕ аслашшĕ. — Ун пекки шкулта çук-çке?

— Мĕнле çук, — кулкаларĕ Санюк. — Вулассипе — «иккĕ», çырассипе — «иккĕ», задача шутлассипе — «иккĕ». Пĕрле хушса шутласан «улттă» пулать!

# ЭПИР ӲСТЕРЕН ТĔЛĔНТЕРМĔШСЕМ

Пĕрре эпĕ хамăр хулари художество галерейне кĕтĕм. Мĕнле кăна картинăсем çук пулĕ кунта!

Акă, пĕр кĕтесре тăпачăпа саккăрăн авăн çапнине кăтартнă.

Эпĕ ун патне пырса тăтăм та, хам ача чухне авăн çапнă кунсене аса илме тытăнтăм. «Çăкăр вăл нихăçан та тар тăкмасăр, тертсĕр пулмасть çав», — шухăшлатăп ăшăмра.

Унччен те пулмарĕ, ман çумма шкул ачи çитсе тăчĕ. Вăл авăн çапакан çынсем çине пӳрнепе тĕллерĕ те: «Килĕр-ха, ачасем, килĕр! — терĕ. — Куратăр-и, ĕлĕк-авал хоккейла епле выляннă!»

# АК ТАМАША...*

ПЬЕСĂРИ ÇЫНСЕМ:

**Сахрун Иванĕ** — сысна фермин заведующийĕ.
**Униççе** — унăн арăмĕ.
**Нăркка**
**Плаки** — сысна ферминче ĕçлекен колхозницăсем.
**Женя** — Иван тусĕ, тепĕр колхозри сысна фермин заведующийĕ.

**Ферма çурчĕ. Сĕтел çинче хаçат-журналсем выртаççĕ, радиоприемник ларать.**

ПЛАКИ **(хаçат-журналсене уçа-уça пăхать).** Акă ĕнтĕ, кур та тăр. Хаçатсем пирĕн ферма пуçлăхне, Сахрун Иванне, ырлаççĕ. **(Вулама тытăнать.)** «Арапуçĕнчи «Хĕрлĕ çăлтăр» колхозри Иван Софронов ертсе пыракан сысна фермин ĕçченĕсем çĕнĕлле ĕçлеме тытăннă. Çавна май вĕсем кăçал кашниех пин те икçĕршер сысна самăртма сăмах пачĕç». **(Пуçне хыçса илет.)** Ав мĕншĕн Иван мана ялан тиркет: эс начар ĕçлен, вĕренместĕн, тет. **(Хаçатсем варринчен çырусем турта-турта кăларать.)** Ара, ку çырусем пурте Иван ячĕпе килеççĕ-çке. Вĕсем ăçтан тетĕр? Кавказран, Уралтан, Харьков таврашĕнчен, Мускав облаçĕнчен...

**Нăркка кĕрет.**

НĂРККА. Иван пур-и?
ПЛАКИ. Вăл çук-ха, правление кайрĕ.
НĂРККА **(сĕтел çинче выртакан çырусене илсе пăхать).** Ку çырусем кам патне килнĕ тата?
ПЛАКИ. Кам патне пулччăр — Иван патне.
НĂРККА. Камсем çыраççĕ?
ПЛАКИ. Шутласа та пĕтерес çук. Краснодар облаçĕнчен, Валя текенскер, Мускав таврашĕнчен — Нина Снегирева... Кашни эрнерех çыру яракан Женя Рябина адресĕ паллă мар вара.
НĂРККА. Аха, тытрăмăр хайхискерне. Авă мĕн туса çӳренĕ вăл курортра, ют хĕрарăмсем тупнă иккен!
ПЛАКИ. Лектерес пулать ăна. Заведующие ларчĕ те халиччен пулнă пĕтĕм йĕркесене улăштарчĕ. Ялан тирпейлĕх, перекетлĕх çук тесе чăркăшать.
НĂРККА. Мана, хуралçа та, пĕрре те канăç çук. Иртнĕ çулсенче çуртсем патне çур çĕр çитеспе пĕрре тухкаласа кĕреттĕм те каллех пӳрте, тӳшек çине канлĕн кĕрсе выртаттăм. Халĕ вара... çĕрле сывăрса пăх-ха.
ПЛАКИ. Çывăрасси çинчен калаçатăн-ха. Куçне уçайман сысна çури ăнсăртран вилсен те каçару çук. Пурнăç йăлтах йывăрланса çитрĕ, Нăркка. Çавăнпа ăна вĕрентмелле пĕрре! Хĕрарăмсене астарнăшăн ответ тыттармалла.
НĂРККА. Кун çинчен арăмне, Униççене, пĕлтерес пулать.
НĂРККА. Тĕрĕс. Халех ун патне çитермелле.
ПЛАКИ. Униççе ăна лайăх тăн кĕртме пултарать.

* Пьесăна Н. Никитинăн «Хăнасем» ятлă калавĕ тăрăх çырнă.

НАРККА. Эпĕ Униççе патне вĕçтерем. Эсĕ кун çинчен никама та ан шарла.

**Нăркка алăк патне пырать. Ана хирĕç Иван кĕрет.**

ИВАН. Эсĕ, Нăркка аппа, ăçта каятăн?

НАРККА. Эпĕ... Эпĕ... Кайса килесшĕнччĕ те...

ИВАН. Эсĕ паян зоотехника кружокĕ пулмаллине манса кайрăн-им тата?

НАРККА. Маннă çав. Эсĕ мана ан ятла-ха. Эпĕ кружока çӳренинчен усси пур-ши вара? Мĕн калани пĕртте хăлхана кĕмест.

ИВАН. Лайăх итлесе ларас пулать. Пули-пулми ĕçсем çинчен сахал шухăшламалла.

НАРККА. Эсĕ мана, Иван, кружока çӳрессинчен, тархасшăн хăтар.

ИВАН. Ун пек юрамасть. Вĕренес пулать. Унсăрăн пурнăç пулмасть.

НАРККА. Эпĕ çамрăк çын мар-çке-ха.

ИВАН. Вĕренни ваттине те, çамрăккине те пăсмасть, усă çеç кӳрет.

НАРККА. Çук, манран вĕренесси пулмасть.

ИВАН. Эсĕ, Нăркка аппа, хăвăн вăйна пуш параппан çаптарса сая яратăн.

НАРККА. Мĕне пĕлтерет ку, пуш параппан тени?

ИВАН. Эсĕ çынсем çинчен кирлĕ-кирлĕ мар япаласем калаçма юратнине пĕлтерет вăл.

НАРККА. Мĕншĕн мана эс ун пек калатăн? Эпĕ çынсем çинчен калаçнине эсĕ хăçан илтнĕ?

ИВАН. Эпĕ хам шухăша пытарса тăма пултараймастăп, тӳрех калатăп.

НАРККА. Ак тамаша, мĕнле хĕсме пуçларăн эсĕ пире...

ИВАН. Çынна пуш параппан çапма пĕлни мар, ĕçе юратни илем кӳрет. **(Витре йăтса картишне тухать.)**

ПЛАКИ. Сисетĕн-и, мĕнле тупта пуçларĕ вăл пире?

НАРККА. Эпĕ ăна вĕрентетĕп-ха. **(Сĕтел çинчи çырусене илсе, йăпăр-япăр хĕвне чиксе хурать.)**

ПЛАКИ. Вĕрентес пулать!

**Униççе кĕрет.**

УНИÇÇЕ. Ман килес.

НАРККА. Питĕ аван-ха ку. Сăмах çинех çитрĕн. Эпĕ хам та сан пата çитесшĕнччĕ-ха.

УНИÇÇЕ. Мĕн тата?

НАРККА **(хăй хĕвĕнчен çырусем кăларса тыттарать).** Акă, ил, вула, савăн.

УНИÇÇЕ. Нимĕн те ăнланмастăп.

ПЛАКИ. Пĕлессӳ килет-тĕк, санăн, ачусене çавăтса, килтен тухса каясси çеç юлнă.

УНИÇÇЕ. Ку мĕне пĕлтерет? Хам килтен ăçта, мĕншĕн каймалла?

НАРККА **(хĕвĕнчен тепĕр хут листи кăларса Униççене тыттарать).** Ме сана телеграмма! Иванăн çĕнĕ арăмĕ пуласси, Женя Рябина текенскер, Лира ятлă хĕрача çуратса панă! Паян акă, ачимĕнĕпех кунта персе çитет...

УНИÇÇЕ **(телеграмма вулама пуçлать).** «Выезжаю с Лирочкой. Встречай на станции...» **(Телеграмма аллинчен çĕре ӳкет. Хăй ним калама аптăраса тăрать.)**

ПЛАКИ. Куратăн-и халь? Ăнланатăн-и?

НĂРККА. Эсĕ иккĕленсе пăхатăн тата. Мана сан пеккисене мар, пĕтĕм фермăна хураллама шанса панă. Апла пулсан, унта ĕçлекен çынсемшĕн те манăннах ответ тытмалла.

УНИÇÇЕ. Мĕн пулса тухрĕ-ха капла?

НĂРККА. Юрать-ха, телеграммине хам алла çавăрса илтĕм. Почтальона алă пусса патăм та хутне тӳрех кунта **(хĕвне кăтартать)** персе чикрĕм.

ПЛАКИ. Кĕç-вĕç персе çитеççĕ ĕнтĕ. Шутла, мĕн тăвăпăр, Униççе?

НĂРККА **(Униççене).** Мĕн эсĕ ни йĕместĕн, ни калаçмастăн, çăварна та уçмастăн?

ПЛАКИ. Хĕрарăмĕ çын евĕрлĕ пулсанччĕ. Вăл ман пекех шатра питлĕ, сăнсăр хĕрарăм, теççĕ.

УНИÇÇЕ. Ав мĕншĕн вăл Крыма, курорта, каяс тесе çунтарчĕ.

НĂРККА. Эсĕ леш çырăвĕсене вулаймарăн-ха. Ăçтан кăна çырмаççĕ вĕсене. Телейлĕ кунçул, ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума ырлăх сывлăх сунатпăр, тесе çыраççĕ.

УНИÇÇЕ. Пĕрре те лăпкă пурăнма çук, яланах мĕн те пулсан сиксе тухать.

НĂРККА. Эсĕ итле-ха тата: хăшпĕрисем ним намăса пĕлмесĕр хăйсен сăнӳкерчĕкĕсене ярса параççĕ.

ПЛАКИ. Çапла çав, çынна пĕрре мухтаса пăсса ярсан, тӳрлетме йывăр. Хаçачĕсем те тупăш илме Иван Софроновран вĕренмелле, теççĕ.

УНИÇÇЕ. Ĕç пирки ăна ним калама та çук ĕнтĕ. Чăнах та пултарать. Çĕрĕн-кунĕн ферма çинчен шухăшлать.

ПЛАКИ. Эй, Униççе, çапла мухтаса тăнă çĕртех вăл сана шăхăртса хăварать-ха.

НĂРККА **(Униççене).** Эпĕ сана хĕрхенетĕп, саншăн куççуль юхтаратăп. Тепĕр тесен, Униççе, мĕн хăрамалли пур унтан. Эпĕ вăл хĕрарăма хамах вĕрентетĕп, килсе кĕрсенех, алăк патĕнчех пусса антаратăп. Кăтартăп ăна çын арçыннисене туртса илме!

**Урамра автомашина сасси илтĕнет.**

НĂРККА. Пĕтрĕмĕр, çитрĕç! **(Униççене.)** Эсĕ мĕн хытса тăратăн? **(Пĕр кĕтесре тăракан патака илсе парать.)** Тыт çак патака!

ПЛАКИ. Вăт, пурнăç! Тĕнчере чĕр çын çине килсе кĕрекен хĕрарăмсем те пур иккен!

НĂРККА **(пăтара çакăнса тăракан тăлăпа илет.)** Эпĕ ăна кĕнĕкĕменех çак тăлăппа хупласа хуратăп. Пĕтеретĕп.

**Пурте алăк патне пырса тăраççĕ. Униççе аллинче — патак. Нăркка аллинче — тăлăп. Вăл унпа пӳрте кĕрекен çынна хупласа хума хатĕрленсе тăрать.**

ПЛАКИ. Ну, шăп тăрăр, ура сасси илтĕнет.

**Алăк майĕпен уçăлать. Малтан михĕ йăтнă Женя Рябина, ун хыçĕнчен Иван кĕрет. Арçынсем иккенне курсан, хĕрарăмсем ним тума аптраса тăраççĕ.**

ИВАН. Мĕн çăварсене карса пăрахнă эсир?
УНИÇÇЕ. Сан леш хĕрарăмми ăçта-ха тата? Килеймерĕ-и-ха?
ИВАН. Мĕнле хĕрарăм?
УНИÇÇЕ. Эсĕ курортра паллашни. Ачалли. Мĕн, пĕлмиш пуласшăн-им тата? Акă, ме, вула, ачи-мĕнĕпех сан пата килеççĕ. **(Телеграмма ывăтса парать.)**
ИВАН **(телеграммăна вулать, сасартăк ăнланса)**. Ха-ха-ха! Акă ĕнтĕ вăл телеграмма хуçи, çакă. **(Рябина çине кăтартать.)** Хăçан илнĕ эс ăна? Мĕншĕн мана тÿрех паман? Хăнана лайăххрах кĕтсе илеттĕмĕр. **(Рябина еннелле çаврăнса.)** Паллашăр, ку ман арăм, Униççе.
ЖЕНЯ. Пит аван. Эпĕ — Женя пулатăп. Хушаматăм — Рябина.
НАРККА **(Плакине питĕ хуллен)**. Ак сана — хĕрарăм. Ай, туртур, тем курса тăрăн...
ЖЕНЯ **(Униççене)**. Эпир сан упăшкăрпа, Иван Софроновпа, курортра пĕрле кантăмăр. Киле таврăннă чухне Мускавра выставкăра икĕ кун çÿрерĕмĕр. Çула май пирĕн пата та кĕрсе тухрăмăр. Иксĕмĕр те сыснасем пăхнине пула малашне ăмăртса ĕçлеме пултăмăр.
УНИÇÇЕ. Лира текенни кам тата вăл сирĕн? Хăвăр хĕрачăр-и?
ЖЕНЯ **(аллинчи мишукне Ивана тыттарать)**. Çук, хĕрача мар, парне Лира ятлă. Çав тери харсăрскер. Аратлă йăх.

**Михĕре сысна çури нĕриклетни илтĕнсе каять. Нăрккапа Плаки пĕр-пĕрин çине пăха-пăха илеççĕ.**

ПЛАКИ. Акă сана «хĕрача»... Лира...
НАРККА. Ак, тамаша!
ИВАН. Женя, эс пирĕн пата килни çав тери лайăх. Вăл хамăрăн ĕçри туслăха çирĕплетме пулăшать.
ЖЕНЯ. Тĕрĕс калатăн, тусăм! **(Ивана тепĕр хут алă парать.)**

**Ч А Р Ш А В.**

# ÇИЧ УРАЛЛĂ ЛАША *

Ю м а х

Пĕр каçхине патша тĕлĕнмелле тĕлĕк тĕлленнĕ: пысăк куçкĕскинче çичĕ уралла шурă лаша курнă. Вăл тепĕр куннех çавнашкал куçкĕски тутарнă та унта чăнах та хайхи лаша тухса тăнă. Патша çиййĕнчех хăйĕн кĕрÿшĕсемпе салтакĕсене çав лашана шырама кăларса янă.

Патша патĕнче Иван ятлă йĕкĕт тарçăра пурăннă. Вăл та, çак лаша çинчен илтсен, патша патне васкан.

— Тархасшăн, мана та çав шур лашана шырама кăларса ярсамăрччĕ, — тенĕ вăл, пуçне çĕре çити тайса. Патша ăна, çамрăк тесе, шансах кайман. Çавăнпа яма килĕшмен. Хурланса тухнă

* Аврам Бурундуков каласа панă тăрăх çырнă.

Иван патша патĕнчен, сĕрĕпе сывраймасăр хăшкăлнă. Чунĕ ун çула тухасшăнах талпăннă. Вара, мĕн пулать те мĕн килет тесе, тепĕр кунне вăл хăйĕн çутă хĕçне илнĕ те çуранах хайхи лашана шырама тухса утнă. Кайсан-кайсан, çул çинче пĕр начар кăна пӳрте кĕнĕ. Унта ватă карчăк пурăннă-мĕн.

— Аçталла çул тытатăн? — ыйтнă унран карчăк.

— Çапла-çапла, пирĕн патша тĕлĕкре çичĕ уараллă шур лаша курнă... Эпĕ те çав лашана шырама тухрăм, — пĕлтернĕ Иван.

— Чăнах та, ку таврара ун пек лаша пур. Анчах та ăна тупма çав тери йывăр. Ку çеç те мар — эсĕ уншăн ху пуçна çухатма та пултаратăн, — тенĕ те карчăк, çав шур лаша ăçта пурăнни çинчен калама пуçланă.

— Хура вăрмана кĕрсен, çул юпленсе каять, — тенĕ вăл. — Санăн вара сылтăммипе утмалла. Кайсан-кайсан, тимĕр витнĕ пӳрт тĕл пулатăн. Унта кĕретĕн те сĕтел тулли апат-çимĕç пуррине куратăн. Сан вĕсенчен пĕрне те çиме е тутанса пăхма юрамасть. Мĕншĕн тесен, сăрине ĕçсен — юну пăсăлать, çăкăрне çисен — пырна ларать. Вилен. Ан ман: хăв хутаççунти апатна çеç çи. Сак пӳртрен инçе те мар сырма юхса выртать. Ун урлă каçма кĕпер пур. Çав кĕпер урлă касхине, вуникĕ сехет тĕлĕнче, виçĕ пуçлă çĕлен хăйĕн аслашшĕ патĕнчен хăнаран юрласа таврăнать. Эсĕ сав çĕлене хăрамасăр кĕтсе ил. Унпа çапăçма йывăр килет. Çĕлен, сана курсан, пĕр çухрăм каялла чакать те, хăвăрт-хăвăрт вирхĕнсе пырса, сана çăтма пикенет. Эсĕ хăраса ан ӳк, çухалса ан кай, вăйхална пух та çĕленĕн пуçне хĕçӳпе касса тат. Пуçне каснă хыççăн çĕлен икĕ çухрăм каялла чакать. Каллех тепĕр пусĕпе сана çăтма вăркăнса пырать. Эсĕ ăна та касса тат. Çĕлене çĕнтернĕ хыççăн хăвăн çулупах малалла ут. Кайсан-кайсан йĕс-тимĕр витнĕ пӳрт тĕл пулăн. Унта кĕрсен каллех сĕтел тулли ĕçме-çиме курăн. Ăна та эсĕ çисе те, тутанса та ан пăх. Каçхине, вуникĕ сехет тĕлĕнче, виçĕ лаша кӳлнĕ ултă пуçлă çĕлен хăйĕн аслашшĕ патĕнчен хăнаран юрласа килет. Эсĕ çав вăхăтра кĕпер айĕнчен хăвăрт кăна сиксе тух та унăн икĕ пуçне касса тат. Çапăçу йывăр пулать. Çĕлен хăйĕн икĕ пуçне касса татнă хыççăн икĕ çухрăм каялла чакать. Вăл, хăвăрт-хăвăрт ĕрĕхсе пырса, сана çăтса яма пикенĕ. Эсĕ хăраса ан ӳк, çухалса ан кай, пĕтĕм вăй-хална пух та çав çĕленĕн икĕ пуçне те харăс касса тат. Ан ман: çĕлен каллех ултă çухрăм каялла чакса, сан патналла ыткăнĕ. Эсĕ ан парăн, юлашки вăйна пухса, çĕленĕн тепĕр икĕ пуçне касса тат. Унтан ху çулупах малалла васка! Кайсан-кайсан эсĕ аякранах ылтăнпа витнĕ ялтăркка тăраллă пӳрт курăн. Çак пӳртре чи хăрушă ватă çĕлен пурăнать. Унăн пӳртĕнче те апат-çимĕç иксĕлми пулĕ. Сак тискер çĕлен каçхине, вуникĕ сехет тĕлĕнче, асламăшĕ патĕнчен хăнаран юрласа таврăнать. Эсĕ, вăл кĕпер çине кĕрсенех, лаша кĕçеннине илтетĕн. Çав вăхăтра санăн кĕпер айĕнчен сиксе тухмалла та çĕленĕн виçĕ пуçне касса татмалла. Çĕленĕ ку — пуринчен те хаярри, пуринчен те вăйли. Вăл сичĕ çухрăм каялла чакса, вут-хĕм кăларса сан çинелле ыткăнĕ, хăватлă хӳрипе çапса кăкăр таран сĕр айне кĕртсе лартĕ. Анчах эсĕ хăраса ан ӳк, çухалса ан кай... Çав хăрушă вăхăтра сана çĕлен аллинчи хайхи çич ураллă шурă лаша пулăшĕ, çĕртен туртса кăларĕ. Тухсан вара тăхтаса ан тăр — çĕленĕн виçĕ пуçне касса тат. Кунпа та çĕлен пĕтмест: вăл юлашки вăйне пухса тăхăр çухрăм каялла чакĕ, унтан каллех сан çинелле ыткăнĕ. Эсĕ çав вăхăтра вăр-вар кĕпер айне чăм. Çĕлен кĕпер çине пырса кĕрсен, хыçалтан сиксе тухса, халсăрланнăскерĕн юлашки висĕ пуçне кас та ывăт! Вара тинех çич ураллă лаша сан аллуна лекĕ. Унпа лăп-

ланса ан лар. Йывăрлăхсем малашне те пулаççĕ-ха санăн. Патша килне каялла таврăннă чух вăрманта пиçсе çитнĕ çырласем тĕл пулăн. Вĕсем сана питĕ илĕртĕç, анчах эсĕ, темле илĕртсен те, пĕрне те татса ан çи. Вĕсем — çĕлен наркăмăшланă çырласем. Кирек хăшне çисен те, вилме пултаратăн. Çавăнпа чăт, тӳс, асăрханулла пул!

Иван, карчăка чун-чĕререн тав туса, тухса каять. Çул çинче йăлтах карчăк каланă пек пулса пырать. Ултав хыççăн ултав, çапăçу хыççăн çапăçу... Иван яланах карчăк каланине асра тытать, çул çинче тĕл пулнă чи хаяр та усал тăшмансене, çĕленсене çĕнтерсе пырать, çичĕ уралла лашана хăй аллине ярса илет. Иван, савăнăçне ниçта хураймасăр, çав çич уралла шурă лашапа патша патневаскать. Кун хыççăн кун, çĕр хыççăн çĕр иртет. Иван хутаççинче апат-çимĕç пĕтсе çитет. Ун çав тери çиесси килет. Мĕн тумалла?! Пăхать те йĕри-тавра, куç умне пиçсе çитнĕ хĕп-хĕрлĕ çырласем туха-туха тăраççĕ. Иван карчăк каланине аса илет. Пĕр çырлине те çимест. Чăтать. Каçхине аслă вăрманти пĕр уçланкăра ним туйми çывăрать, тепĕр кунне ирех çула тухать. Кайсан-кайсан, унăн шыв ĕçесси килет. Инçе те мар, çăлран шыв юхни курăнса каять. Ăна каллех карчăк вĕрентсе каланисем аса килеççĕ.

«Çук, чăтас пулать, хама хам ултавпа вĕлерме юрамасть», — шухăшлать Иван. Вăл, тарăхса çитнипе, юхса выртакан çăл шывне аллинчи патакĕпе хыттăн çапать. Тĕлĕнмелле: çăл шывĕнчен çавăнтах хĕрлĕ юн сирпĕнсе тухать. Иван вара çаврăнать те малалла васкать. Çул çинче тепĕр каç вăрман варринчех çĕр каçма тивет. Каллех хăрушă япала. Ирхине, çывăрса тăнă-тăманах вăл таçтанинçетрен вуникĕ пуçлă çĕлен чашкăрса килнине туйса илет. Иванăн çич уралла шурă лаши те çакна сисет, çавăнтах малалла тапса сикет. Кайсан-кайсан, вĕсем пĕр тимĕрçĕ лаççи тĕлне пырса тухаççĕ. Ак, тамаша: вуникĕ пуçлă çĕлен вĕсенчен юлмасть иккен, çул тăрăх чашкăра-чашкăра пырать. Иван аптăрамасть: лашине çавăтса, тимĕрçĕ лаççине кĕрсе ларать. Ăна шал енчен питĕрсе хурать. Çĕлен, вут-хĕм сирпĕтсе, тимĕрçĕ лаççи тĕлне çитет. Çав тери тарăхнине пула вăл чĕлхипе лаç алăкне шăтарать те унта кĕме пикенет. Иван çавăнтах унăн мĕнпур пуçне каса-каса пăрахать, лашипе каллех инçе çула тухать. Кайсан-кайсан, Ивана патша салтакĕ тĕл пулать. Вăл унтан тархасласа çич уралла лашана хăйне пама ыйтать. Иван, темле тархасласа ыйтсан та, пама килĕшмест. Салтак урса каять, Ивана хăрата пуçлать. Иван ырă марра çийĕнчех сиссе илет. — Хăвăн аллунти ылтăн çĕррӳне хывса пар, ун чух, тен, эпĕ те лашана пама килĕшĕп. Эсĕ ху мĕнле шутлатăн? — ыйтать Иван.

— Парăттăм, анчах çĕррĕм, тем тусан та, пӳрнерен тухасшăн мар, — пĕлтерет ăна салтак.

— Мĕн тăвăн ĕнтĕ, — тет Иван. — Эпĕ те сана хам лашана параймастăп.

— Апла пулсан, çĕрре эпĕ пӳрнепе пĕрлех касса паратăп, — сăмах парать салтак. Çапла вара, патшаран ырă ят илтме хыпăнакан салтак ылтăн çĕррине пӳрни-мĕнĕпех касса парать те Иван аллинчи çич уралла лашана илсе каять.

...Салтак патша патне çичĕ уралла шурă лашапа çĕмĕрттерсе пырса кĕрет. Халăх тĕлĕнсе каять. Патша хăй те çав тери савăнать. Вăл вара çавăнтах хăйĕн кĕçĕн чипер хĕрне çав салтака качча пама килĕшет. Çак хыпар Иван хăлхине те пырса кĕрет. Вăл хăй чунчĕререн юратнă çав хĕршĕн çунать. Мĕн тумалла? Туй пуçланать. Сăвă-юрă, ташă-кулă янăраса тăрать. Туй кĕрекинче патша савăнса, мухтанса ларать. Вăл салтака хĕрĕпе пĕрле хăйĕн хаклăран та

хаклă çур мулне пама пулать... Иван тўсеймест, палламалла мар тум тăхăнса, туя пырса кĕрет. Шăпах çав вăхăтра патша салтакĕ хăй çич уралла шурă лашана мĕнле тупни çинчен мухтанса каласа парать. Салтак нумаях та мухтанаймасть, Иван хăвăрт кăна туй сыннисем хушшине кĕрсе тăрать те çапла калать: «Патша-аттемĕр, туй çыннисем! — тет хыттăн. — Салтак сире пĕтĕмпех суять! Çичĕ уралла лашана вăл мар, эпĕ тупрăм! Салтак ăна манран хăратса илме тăрăшрĕ. Эпĕ лашана хăйĕн аллинчи çĕррипе çеç улăштарма пултăм. Вăл вара, çĕрри пўрнинчен тухман пирки, мана пўрнипех касса пачĕ. Акă вăл — унăн пўрнипе çĕрри!»

Патша тĕлĕнсе-хытсах каять хайхи. Туй халăхĕ Ивана мухтама тытăнать. Ним тума та çук — патша хăйĕн кĕçĕн хĕрне Ивана качча парать.

Туй кĕреки варринче мухтанса ларакан салтак ним те калаймасть. Вăл намăсланса, хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайса, туйран тухса шăвăнать.

Çав туйра эпĕ те пултăм, купăс кала-кала туй çыннисене савăнтартăм...

## Пур-ха вĕсем...

**Пур-ха вĕсем, ун пек çынсем,—**
**Тўрпилĕксем, харампырсем,**
**Спекулянтсем, шабашниксем,—**
**Ĕçрен тарса çўрекенсем...**
**Вĕсем тĕнче ырлăхĕпе,**
**Çĕршыв-анне пурлăхĕпе**
**Пĕлеççĕ шăппăн пурăнма,**
**Яраççĕ ирĕк хырăма.**
**Вĕсем çинчен сăмах çапла:**
**Пĕр тĕп юлми кăкламалла!**

## Пушарник сăмахĕ

**Всем понятно пулмалла,—**
**Пушар страшнă япала.**
**Так что пирĕн малалла**
**Çакна помнить тумалла:**
**Пушар тухнă-тухманах**
**Очень срочно, çавăнтах,**
**Высше сообщит тумалла,**
**Помощь яма ыйтмалла.**
**Справнăй пулччăр насуссем,**
**Есть ли ведро-пакурсем,—**
**Все зависит вĕсенчен,**
**Подумайте кун çинчен.**
**Эпир дружно пулнинчен,**
**Ĕçшĕн болеть тунинчен**
**Килеç большой успехсем,**
**Вот и все ман, юлташсем!**

## Санюкпала Михала

Савăнмалли япала:
Санюкпала Михала
Пĕрне-пĕри юратса,
Çĕр çĕмĕрсе, туй туса
Мăшăрланчĕç питравра,
Çырла писнĕ вăхăтра.
«Эх, ырлăх,— тет Михала,—
Çумри сывăх сынпала,
Саркайăк пек Санюкпа,
Сар çурта пек арăмпа...»
Чипер, çĕнĕ мăшăра
Пурте кирлĕ пурнăçра:
Тыр акмалла, вырмалла,
Йĕтĕн-кантăр татмалла.
Вуттине те çурмалла,
Кăмака та хутмалла.
Çемье тени вăл — çапла,—
Ĕçшĕн çунса тăмалла:
Ачине те пăхмалла,
Яшкине те çакмалла,
Ĕнине те сумалла,
Кĕпине те çумалла...
Ай, тамаша, япала:
Санюкпала Михала
Çапла, пĕрле пуличчен,
Пĕр йăвана кĕриччен
Пĕр ĕçе те ал тĕртмен,
Пĕр ĕçе те вĕренмен.
Ак халь тăрсан ĕç умне, —
Вĕсем шанаç пĕр-пĕрне,
Санюк хушать мăшăрне,
Михалийĕ — Санюкне.
Çапла çав вăл, тусăмсем,
Йăмăксемпе шăллăмсем:
Начар — ĕçе пĕлменни,
Кирлех ĕçе вĕренни!

## Кала...

Кала, мĕскер тума эс кирлĕ
Хальхи илемлĕ ĕмĕре!
Тунма çуках: чуну сан чирлĕ,
Ăна кăшлать-мĕн чĕмере.

Çынна мĕнпе эс ырă тунă,
Кама хăтарнă инкекрен!!
Ман чун туять: шăпу сан тулнă,
Шăп çеç иртетĕн çынсенчен.



30456 чув
Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА

Эс капăр тумланса çӳретĕн,
Саватăн хӳхĕм хĕрсене.
Сăра, пыл-çу ĕçсе çиетĕн,
Тухан яш-кĕрĕм ваййине.

Апла ăçта-ши намăс санăн! —
Пĕлместĕн ĕç мĕн иккенне.
Этем ятне, чысне варлатăн,
Ахальирттертĕн ĕмĕрне!

Сан пек çынна эп курăймастăп.
Эс çĕршыва сиен кӳрен.
Мĕнпур тарăхупа калатăп:
Тасал, тĕнче, çӳп-çапсенчен!

## Укахви

Укахвине мĕн çитмест,
Ăна ĕнтĕ кам пĕлмест;
Килтен киле васкаса,
Усал-тĕсел пуçтарса
Вăл çӳреме юратать,—
Пур ялйыша пăтратать.

Укахвине мĕн çитмест,
Ăна ĕнтĕ кам пĕлмест;
Çăхав çырса, «тертленсе»,
Çынсен чунне чĕпĕтсе,
Пӳрни тухрĕ хăпарса,
Сăнĕ кайрĕ шуралса.

Укахвине мĕн çитмест,
Ăна ĕнтĕ кам пĕлмест;
Хăй мăшăрне кĕвĕçсе,
Ун урăххи пур, тесе,
Кунĕн-çĕрĕн чĕпĕтсе,
Йăлтах ячĕ типĕтсе.

Укахвине мĕн çитмест,
Ăна ĕнтĕ кам пĕлмест;
Хăйне ăслă çын тесе,
Ыттисене тиркесе,
Хурса çӳп-çап вырăнне
Сая ячĕ ĕмĕрне.

Укахвине мĕн çитмест,
Ăна ĕнтĕ кам пĕлмест;
Йăлтах çĕрсе кайиччен
Ярса илер хӳринчен!
Вăл ан култăр тек пиртен,
Ыр кăмăллă çынсенчен!

## Ялта кĕтетчĕç агроном

Колхоз вĕрентрĕ Пахома
Укçа парса агронома.
Ăна кĕтетчĕç,
ăс пухса,
Тăван яла таврăнасса.
Хайхи Пахом институтран
Диплом хутне илсе тухсан,
Юлма шутларĕ хулана,
Пĕр вокзалти ресторана.
Официант унта Пахом...
Ялта кĕтетчĕç агроном...

## Ахăлтатса хĕвел кулать

Мĕн каласси: Кăтра Иван —
Сăнпа чипер, чунпа йăваш.
Эх, тамаша, ăна курсан,
Каçсах каять ман пĕр юлташ:
«Иван Иванч, эс — пуçлăхра,
Пире усратăн ырлăхра.
Мĕн виличчен эп санпала,
Çапла райра пурăнмалла.
Çав териех аван пĕрле,—
Пире «курмастăн» сыпнине.
Çĕр çĕмĕрсе ташла-кĕрле,—
Хахать ямастăн çын çине...»
Такмакласа çапла юрлать,
Турикасри чее Çтаппан.
Ахăлтатса хĕвел кулать
Пирте ун пек çынсем пуртан!

## Кĕрхи шăна

Куштан иккен кĕрхи шăна,
Йăлтах кăларчĕ ман тăна:
Ăçтан сисет! — ларать, çыртать,
Тытма тăрсан — вĕлт! çеç тарать.
Шухăшласан — чун ыратать,
Танлаштарсан — чун тарăхать:
Мĕнле вăл йывăр, тус-тăван,
Усал çынсем çапла çыртсан!

## Çăхавçă

Пуш сăмах çапатăн эс куллен,
Калаçатăн юлташлăх çинчен.
Ху вара, халиччен эп пĕлмен,
Икĕ питлĕ суя çын иккен.
Анонимçă, элек пуçтаран,
Çăхав хыççăн çăхав шав çыран,
Çынсене варлама мел шыран,
Эртелти туслăха аркатан.
Хăвна çеç çын тесе эс шутлан,
Çуккине шутласа кăларан,
Çумăнти юлташна макăртан.
Ултавпа юнашар эс утан,
Пирĕн çутă кӳлле пăтратан...
Иртейместĕн иккен чăнлăхран,—
Чун сисет — капкăна çакланан,
Сисрĕç эсĕ хура юнлине,
Пире вăрттăн сăхса тăнине...
Çук! Çитет! Эс текех ан пытан,—
Тасалатпăр, çăхавçă, санран!

## Тăмана

Эх, тăмана, тăмана,
Мĕн калам-ши эп сана!—
Каçпа çĕклен эс пуçна,
Аран уçан ик куçна,
Ялан таçта эс ваксан,
Çуртсем çумне ăнсăртран
Пыра-пыра çапăнан,
Намăс-симĕс сукка сан,—
Ашкăнмашкăн тытăнан:
Чăх-чĕп тытма юратан,
Çынна хĕн-хур кăтартан...
Ĕмĕр çапла хăтлансан
Асту, пĕрре çакланан,
Сĕмсĕр пуçна çухатан!

## Кун вĕçленчĕ пулмалла

Ӳркенмест çав ман ура,—
Ирех çитрĕм кантура.
Пĕр пуçлăха курмалла,
Унпа пĕр ĕç тумалла.

Пуплет вахтер манпала:
— Кĕтме тивет пулмалла.
Юлташăм,— тет,— эс тăхта,
Пуçлăх кайнă апата.

Вăхăт хаклă, час иртет,
Виç сехет те ак çитет.
Уткалатăп çурт тавра,
Хураллатăп кантура.

Вахтер пуплет манпала,—
Юри шӳтлет пулмалла:
— Аван-и, — тет, — вахтăра!
Пуçлăх халь те апатра...

Йăпататăп эп хама;
Çитет хăват тăхтама!
Мĕн калас тен, чăтмалла,
Ĕçе татса каймалла.

Анчах вахтер систерет:
— Паян кай,— тет,— каялла,
Ыран килĕн ир-ирех,
Кун вĕçленчĕ пулмалла...

## Кĕмĕл çăпала

Иван Петровч пултарать,—
Парне илме юратать.
Вăл, çуккине пур туса,
Тĕрĕс тесе, шантарса,
Пичет çапса, ал пусса
Шур хут ярать собеса.
Çак хут ларать пит хакла,—
Унпа пенси памалла...
Саккун, йĕрке хушнипе,
Иван Петровч хӳттипе
Хайхи кашни уйăхрах,
Хĕрĕх тенкĕ ытларах
Патшалăхран Маруçа
Килсе тăрать çĕн укçа.
Маруç уншăн савăнса,
Ылтăн сăрпа çыртарса:
«Петровича тав туса,
Чунтан-вартан ыр сунса!» —
Пачĕ хаклă япала,
Çап-çут кĕмĕл çăпала.
Мĕн тăвас, тен, тупата,
Çакна сисрĕç кантурта,—
Петровича халь кунтан
Вашт! сирпĕтрĕç вырăнтан.
Унăн йăва тупмалла,
Анчах мĕн-ха тумалла! —
Хакла ларчĕ пулмалла

Хайхи кӗмӗл ҫӑпала.
Ҫитет кун пек пурӑнма,
Парне тесе сутӑнма.
Саккун, чӑнлӑх хӗмӗпе
Хӗртер тӗпӗ-йӗрӗпе
Патшалӑха суйнине,
Алла алӑ ҫунине!

## Санюк Санькки кӑна выртать

Ялта кашни кал-кал ӗҫлет,
Кӗрхи куна кӗтсе илет:
Лавруш Ляви лаша кӳлет,
Муҫҫей мучи мунча сиплет,
Куршук Куҫми хире тухать,
Комбайнер вӑл, ыраш вырать.
Катис Калли ҫӗртме тӑвать,
Ҫӗртме тӑвать, ҫерем уҫать.
Пурхи Петти пура пурать,
Тарас Тарйи турпас пухать.
Сахрун Сухви сухан суйлать,
Насар Наҫҫи пуса тытать.
Васан Васси уйран уҫлать,
Ҫатра Ҫаркки ҫатан ават.
Курмиш Кули кӗпер хывать,
Палюк пичче пӑяв явать...
Санюк Санькки кӑна выртать,—
Ял этеммин ятне ярать.

## Пӳрнепе тӗллесе

Эп тӑратӑп сана итлесе,
Эс ятлатӑн мана шеллесе...
Сӑмах патӑм ӗҫместӗп, тесе,
Пӳрнепе эрехе тӗллесе!
Аванах туйса илтӗм иккен,—
Курман усӑ нихҫан ӗҫкӗрен.
Вӑл пайтах хӗн кӑтартрӗ мана,
Хӗн кӑтартӗ ача-пӑчана.
Эрехпе мӗн чул ҫын ҫухалать,
Мӗн чул ырӑ ҫемье саланать...
Ун сиенӗ, инкекӗ ҫинчен
Ах, ӑҫтан каласа пӗтерен.
Ҫӗлен пек вӑл сӑхать ҫынсене,
Пайтах терт кӑтартать тӗнчене...
Кам ҫакна ӑнланса илеймест —
Ҫитес тенӗ ҫӗре ҫитеймест...

# Çитет!

Кăнтăр енче, Çĕнкасра,
Чипер çĕрте, шăплăхра,
Кусма Кусмич пурăнать.
Ялан йăва çавăрать.
Кусма Кусмич кусĕнчен
Пĕр япала халиччен
Вĕçерĕнмен, сухалман,
Вăшăл-вашăл тарайман.
Кусма Кусмич ачаран
Алли кукăр пулнăран
Пăртак паллă хулара,
Пăртак паллă халăхра.
Вăл хăй пысăк стройкăра
Ĕçлет пĕчĕк пусăхра.
Пусăх тесе майĕпен,
Ĕçри çынсем сисиччен
Мĕскер лекет аллине
Сĕтĕрет хăй йăвине.
Кун чул пулса халиччен,
Çур ĕмĕре çитиччен,
Пĕр кирпĕч вăл çаптарман,
Пĕр хăма вăл çуртарман,
Пĕр пăта вăл туянман,—
Пĕр тăкак та вăл курман.
Кирпĕч кирлĕ — çаклатать,
Хăма кирлĕ — йăкăртать,
Пăта кирлĕ — пĕçертет,
Патшалăхăн çитет, тет.
Кусма Кусмич йăвине,
Юмахри пек çурт-йĕрне
Пăхсан — этем тĕлĕнет,
Кĕрсе курма иленет...
Пĕрре çепла ăнсăртран,
Халăх кусла пулнăран,
Кусма Кусмич капкăна
Кĕрсе ӳкрĕ кап! кăна.
Çитет, çитет ашкăнма,
Патшалăха çаратма!

✻



# Матвей САКМАРОВ

Матвей Сакмаров Патăръел районĕнчи Пăлапуç Пашъел ялĕнче 1913 çулта кун çути курнă. Хусан университетĕнчен вĕренсе тухнă. 1930-мĕш çултанпах учительте вăй хурать. Тăван çĕршывшăн пынă Аслă вăрçăра хастар çапăçнăшăн ăна икĕ орденпа, вунă медальпе чысланă.

Сакмаров, вунвиçĕ çулта чухнех алла шĕвĕр ручка тытса, пурнăçри йăх-яхсемпе кĕрешме тытăннă. Ун чух вăл вулакансем умне «Кăркка Сăмси» ятпа тухнă. Анчах куштансемпе шăрчăк этемсем вăл камне шăршласа тупнă-тупнах. Вара хĕсĕрле пуçланă, патак та тутантаркаланă. Çапах Кăркка Сăмси парăнман, çавнашкал йĕрĕхсенчен иккĕшне судпа айăпланă та, ыттисем хăйсемех хўрисене кирлĕ çĕре хĕстернĕ.

Матвей Алексеевич паян кун та «Капкăн» журналпа тачă çыхăну тытать, пурнăçри тўнтерлĕхсене май килнĕ таран тустарать. Хăй çамрăк мар пулсан та, куçĕ çивĕч-ха унăн, чĕлхи — вĕри. Эппин, пурнăç йăх-яхĕ унран малашне те хăтăлса пурăнаймĕ.

# «ПШИК» ÇЫРТĂМ

Манăн пĕр çывăх юлташ вар ыратнипе аптратчĕ. Тĕрлĕрен больницăсенче чылай выртрĕ, вырткаларĕ вăл. Шалт начарланса çитрĕ, тирĕпе шăмми кăна тăрса юлчĕ. Операци тутарма пĕрре çеç мар сĕннĕ ăна врачсем — килĕшмен, вилсе каясран хăранă.

Юлашкинчен, мĕн килет те мĕн каять тесе, килĕшнĕ хайхи çĕçĕ айне выртма.

Пĕрре операци тăваççĕ çакна — ăнăççăр пулать, тепре касаççĕ — каллех ăнăççăр. Виççĕмĕш хут пыршине кĕскетсен тин çўрекен пулчĕ ача.

Эпĕ çакăн çинчен заметка çыртăм та, хаçат редакцине илсе кайрăм.

— Ай, мĕнле чаплă факт! — савăнчĕ куçлăхлă, лапсăркка çўçлĕ çамрăк юлташ, заметкăна вуласа тухсан. — Санăн кун çинчен очерк çырмалла. Ним тăхтаса тăмасăр пичете кайма пултарать.

Кăмăла кайрĕ канаш. Чылай тăрмашрăм очерк кăмăллă пултăр тесе. Ятне те, çынсене интереслентерес тесе, «Çур пыршăллă этем» тесе патăм.

Очерксемпе пирĕн урăх çын ĕçлет, çавна вулаттарăр, — сĕнчĕ мана унччен пĕлекен куçлăхлă çамрăк, хăй патне тепре пырсан.

— Урăх çын-тăк — урăх çын. Шыраса тупрăм литературăпа искусство пайне. Тимлĕн вуласа тухрĕ ăна унта лараканни.

— Эсир хăвăр очеркăрта пуринчен ытла чиртен сывалнă çын пирки çыратăр, — терĕ вăл, куçне хут çинчен илсе. — Чăн герой кам-ха кунта? Тухтăр! Ун çинчен çырмалла та. Сестрасемпе санитаркăсене те манса хăварма кирлĕ мар. Операцие хатĕрленнине, мĕнле ирттернине, çын сывлăхĕшĕн тăрăшнине йăлтах сăнламалла. Паллах, кунта санăн медицинăна та кăшт пĕлмелле, операци тума кирлĕ инструментсемпе эмел ячĕсене те чухламалла. Вара пичете юрăхлă пулĕ.

Хайхи, канăç текенни, шыва чăмнă пекех çухалчĕ манăн. Медицина енĕпе çырнă кĕнекесемпе журналсем вулама тытăнтăм, больницăсене чупа пуçларăм, операцисем тума епле хатĕрленнисене сăнарăм. Çапла «багаж» пухнă хыççăн очерка тĕпренех улăштартăм. Унтан каллех редакцие çул тытрăм.

— Эсĕ çырни пĕтĕмпех — медицина çинчен. Пирĕн литературăпа искусство пайĕ кун пек материалсемпе интересленмест. Наукăпа техника пайĕнчи юлташсене кăтартса пăхăр-ха, тен, ку япала вĕсемшĕн юрăхлă, — ăс пачĕ мана литсотрудник.

Мĕн вара, наукăпа техника пайне те кайăпăр. Çитрĕм унта.

— Ним çĕнни те çук кунта. Кун пек операцисене пур больницăсенче те тахçанах тăваççĕ, пичетре те сахал мар пулнă кун пек операцисем çинчен. Чĕлхи те темĕскер, пит «медицинăлла»... «Здоровье» журналтан çырса илмен-и эсир куна? — терĕ пĕр чиперкке.

Эпĕ çурăлас пек тарăхса кайрăм.

— Мĕнле çырса илнĕ пултăр! — кăшкăрса ятăм çавăнтах. — Ку — чăн япала! Хамăр больницăрах, вилме патне çитнĕскере, виçĕ хут операци туса çын турĕç!

— Во, ку вара вуçех урăх коленкор, — йăл кулчĕ чиперкке. — Сипленнĕ çыннăн, тухтăрăн, сестрасен ячĕсене, хăш больницăра, хăçан пулнине ăнланмалла кĕскен çырăр та, информаци пайне парăр. Ыранхи номертех сирĕн заметка кун курма пултарĕ.

Итлерӗм мӗн хушнине. Очеркран пӗчӗк ҫеҫ заметка турӑм та информаци пайне кайрӑм.

— О-о, тахҫанах пулса иртнӗ япала-ҫке ку? Кивелнӗ, — терӗ ҫӳҫӗ шурала пуҫланӑ арҫын, унтан ман заметкӑн ҫӳлти кӗтессине «КАЙМАСТЬ, АРХИВА» — тесе ҫырса хучӗ.

Ирӗксӗрех асатте каланӑ юмах аса килчӗ.

Тахҫан авал, тимӗр тупма ҫав тери кансӗр пулнӑ. Пӗр тимӗрҫӗ тимӗр муклашки тупнӑ та, сухапуҫ тимӗрӗ тума пикеннӗ. Хӗртехӗрте чылай шакканӑ вӑл ӑна. Анчах, ӗҫӗ пула пӗлмен. Татах вучаха чикнӗ. Пӑхнӑ та хайхи, тимӗр муклашки пӗчӗкленнӗ ларнӑ. Ҫуна-ҫуна калӑпӑшӗ чакнӑ-мӗн унӑн.

— Халь кунран сухапуҫ тимӗрӗ пулаймасть ӗнтӗ, пуртӑ тӑвас, — шутланӑ тимӗрҫӗ. Шакканӑ-шакканӑ та — пуртӑ та пулайман.

— Юрӗ, ухват тӑвӑпӑр, — малаллах ӗмӗтленнӗ «ӑстаҫӑ».

Анчах ухвачӗ те манерленеймен. Юлашкинчен шӗшлӗ тума тытӑннӑ. Шӗшлӗ те тӑвайманнине пула тимӗрҫӗ хӗртнӗ тимӗре сивӗ шыва ярӑнтарнӑ та, лешӗ «пш-и-ик!» туса, пӑс ҫеҫ кӑларса янӑ.

Эпӗ те ҫапла «пшик» кӑна ҫыртӑм.

# ХӐЙ ИРӖКӖПЕ ЧӖЛХЕСӖРЛЕННӖ ЭТЕМ

Иван Михалча курманни ик-виҫӗ ҫул та иртнӗччӗ пулас, ӑнсӑртран троллейбусра тӗл пултӑм. Анчах ӑна мӗн амакӗ пулнӑ-ха, чӗлхесӗрленнӗ?

— Гражданин, эсир ҫитес остановкӑра анмастӑр пулсан, ҫынсене иртме чӑрмантарса ан тӑрӑр! — терӗ пӗри Иван Михалча, анчах вӑл ӑна нимӗн те чӗнмерӗ. Лешӗ ҫакна кура тата хытӑраххӑн кӑшкӑрчӗ. Иван Михалч ҫав-ҫавах нимӗн те шарламарӗ, хӑлхине аллипе тытса, пуҫне ҫеҫ сулларӗ. Куҫа-куҫӑн курса эпӗ саламланине те пуҫӗпе сӗлтсе кӑна ответлерӗ.

Троллейбусран пирӗн иксӗмӗрӗн те пӗр остановкӑрах тухма тиврӗ.

— Мӗн эсир, Иван Михалч, хӑлха чирӗпе аптрамастӑр пулӗҫке? — ыйтрӑм эпӗ унран.

— Ҫук, пурте тӗрӗс-тӗкелех, — калаҫа пуҫларӗ вӑл. Вара хӑй ирӗкӗпе юри «чӗлхесӗр» пулни ҫинчен мыскараллӑ истори каласа кӑтартрӗ.

«Пӗррехинче троллейбусра ларса пыратӑп, — пуҫларӗ вӑл калавне. — Халӑх — ҫапса хӗстернӗ пек тулли.

— Эс мӗн ура ҫине слон пек пусатӑн?! — кӑшкӑрса пӑрахрӗ мана хам ҫумри ҫын.

— Хӑвӑрах куратӑр вӗт, таксипе пымастпӑр, троллейбуспа, — тавӑртӑм ҫийӗнчех ҫакна. — Ура пусма та вырӑн ҫук.

— Троллейбус тесе вара çын пуçĕ тăррине те хăпарса ларма юрать-им-ха? — калаçăва хутшăнчĕ тепри.

— Вĕсем пеккисем çын пуçĕ çине урине хума та хатĕр, — вĕшкĕртрĕ виççĕмĕшĕ.

— Эсир пуçăра хулпуççи çинчех йăтса çӳрĕр, урайне ан хурăр, вара никам та таптаймĕ, — шӳтлеме пăхрăм эпĕ çавсемпе.

— Пăхăр-ха, пăхăр, епле чурăс этем вăл! — кăшкăрса ячĕ тăваттăмĕшĕ.

— Ара, эпĕ ун ури çине юри пусман вĕт! — парăнмарăм эп çаплах. — Курмастăр-им, халăх мĕн чухлĕ!

— Юри мар пултăр та-ха, анчах таптамаллах-им вара?

— Акă, халь эсир таптарăр ĕнтĕ ман урана, — тетĕп эпĕ, сулахай урана кӳршĕ ури айĕнчен аран-аран кăларса.

— Ха, епле чее, юри сăлтав шырать! Юри чăркăшать! Ытла кутăн ку этем.

— Каçару ыйтас вырăнне талпаса епле перет, упăте!

Калаçăва çич-сакăр çын хутшăнчĕ, пурте мана хирĕç. Тен, ман майлисем те пур пулĕ те, камăн сăмаха кĕрес килет — хутшăнмаççĕ. Пĕр остановка кăна кайнăччĕ, çаннисене хул тĕпне çити тавăрса янă, аллисем çине тĕрлĕрен çĕлен-калтасем йĕплесе ӳкернĕ, вăтăр çулалла çитнĕ патвар этем, «халăха пăлхатса пыран» тесе, ĕнсерен ярса илчĕ те троллейбусран вĕлт! кăна сирпĕтсе антарчĕ мана. «Çапла кирлĕ ун пеккисене!» — тенĕ сасăсем кăна илтĕнчĕç хыçалтан.

Темиçе кун иртсен троллейбусра пĕр çамрăк пике ури çине пуснă пек туйăнчĕ мана.

— Каçарăр, чиперкке, — терĕм эпĕ, ун еннелле çаврăнса, — ăнсăртран пулчĕ.

— Мĕншĕн каçармалла вара сире? — тĕлĕнчĕ пике.

— Эпĕ сирĕн урăра таптарăм пулас...

— Тупнă каçару ыйтмалли. Троллейбусра вĕт эпир, урамра мар.

—Çапах та, чиперкке, каçару ыйтатăп сирĕнтен...

— Çитет супĕлтетсе пыма, пăрахăр. Килне таврăнсан асаннĕрпе пакăлтатăр.

— Эпĕ пĕрре те сире кӳрентерес шухăшпа каламанччĕ...

— Мĕн куршанак пек çыпçăнтăр хĕр çумне? — хыттăн кăшкăрса пăрахрĕ çак вăхăтра тахăшĕ.

— Эпĕ каçару ыйтрăм çеç, — ăнлантартăм ăна лăпкăн. — Унсăр аван мар çапах та.

— Кулатăн эсĕ çынран. «Чиперкке» тесе тăрăхлать тата, — хутшăнчĕ калаçăва пĕр çамрăк арçын.

— Эпĕ нимĕн усалли те каламарăм-çке?..

— Çитет сана паврама! — кăшкăрса ячĕç иккĕн-виççĕн харăсах.

Хам та сисмерĕм, ман ума çаннине тавăрнă хайхи этем тухса тăчĕ.

— Пĕлетĕп эпĕ ку эteме, — терĕ вăл, мана хулран çавăрса тытса, — ялан тавлашу хускатса çӳрет вăл.

Сиссе те юлаймарăм вара, троллейбус чарăннă-чарăнман урамалла сирпĕнсе те тухрăм.

Кун хыççăн ĕçе пĕр вунă кун çурранах çӳрерĕм. Анчах инçерех çав, ывăнтарать ватă çынна. Халь вара троллейбус ăшне кĕрсенех чĕлхесĕре перетĕп те ним шарламасăр пыратăп.

# ЭЛЕКÇĔ

Кĕтерук инке çăлтан шыв ăсма чи малтан çитет те кашнинчех чи кая юлать. Хальхинче те çаплах пулчĕ, çăл патне çитнĕ-çитмен палкама тапратрĕ.

— Ануш кумма, эсĕ илтнĕ-и-ха? — шыв ăсма хатĕрленнĕ хĕрарăма хăй патнелле туртрĕ вăл çаннинчен. — Ах, тур-тур...

— Мĕн тата? — тĕлĕнчĕ Ануш.

— Те калас ĕнтĕ, те калас мар...

— Кала, ара, кала?

— Асту, Ануш кумма, никама та ан шарла тульккĕ. Ĕнер пирĕн кӳршĕри Маюка милици тытса кайрĕ. Хам куçпа хам куртăм...

— Ну? Чăнах-и?

— Туршăн та...

— Мĕнле майпа куртăн тата?

— Хи-хи-хи! — кулса ячĕ Кĕтерук. — Куртăм çав, чӳречерен куртăм. Хĕвел аннăччĕ-ха ун чухне. Каç сĕмĕ çапнă. Маюксем патне хайхи милици, Тукасри Микихвер ывăлĕ, кĕрсе кайрĕ. Пăртак тăрсанах Маюка çавăтса тухрĕ. Маюкĕ каясшăн мар, турткалашать.

— Ак тамаша!

— Çапла çав. Ял хушшинче: Маюк та Маюк, теççĕ. Пуху таврашĕ пулсан, ăна сĕтел хушшине, мала лартаççĕ. Акă, халь мĕн килсе тухрĕ-ха? Фермăри чаплă хĕр мĕн кăтартрĕ? Ĕне сăваканскер, сĕт вăрланă пулĕ-ха. Тем каласан та, вăрланах...

Кăнтăрла иртнĕ тĕле ялта çак хыпара илтмен карчăк та юлмарĕ, тахçантанпах хăлхи тайлăк Укçине асанне те пĕлчĕ.

Анчах мĕнле-ха ку? Маюк ялтах çӳрет. Шурă кĕпе тăхăннă, хĕрлĕ тутăр çыхнă хĕр, нимĕн пулман пекех, фермăна утрĕ. Çакна курсан, карчăксем шалт тĕлĕнчĕç. Кĕтерук та йăлтах аптраса ӳкрĕ. «Çук, ку ахалех пулас çук. Милицирен темле майпа çăлăнса килнĕ ĕнтĕ Маюк. Вăт сана, тĕрĕслĕх пур тесе шутла...»

Тĕттĕмлене пуçласан, милиционер каллех Маюк патне çитрĕ. Пĕччен те мар, милици уйрăмĕн начальникĕпе. Кĕтерук инке чăтса тăраймарĕ, хӳме урлă каçрĕ те Маюксен чӳречи умне йăпшăнса пырса тăчĕ. Кармашкаласа пăхрĕ. Пӳртре калаçни илтĕнет.

— Ĕç-ха, ĕç, тăванăм. Пĕр стакан сăра ĕçнĕшĕнех нимех те пулмĕ. Шыв ĕçесрен анчах вăл... — хистет Маюк амăшĕ.

— Чим-ха, чим, эсĕ пире пит ан хисте. Малтан ĕç пирки калаçса татăлар. Ку пули-пулми пĕчĕк ĕç мар вĕт, — илтĕнет милици начальникĕн хулăн сасси.

Çак вăхăтра Маюксен килĕнчен такам тухрĕ пулас, алăк шалтлатни илтĕнчĕ. Кĕтерук инке вара, çамрăк чухнехи пекех, хӳме урлă вăш-ваш сиксе каçрĕ те килнелле васкарĕ.

«Ăнланмалла, питĕ ăнланмалла. Пули-пулми пĕчĕк ĕçпе мар... Пысăк ĕçпех лекнĕ пулмалла. Пĕчĕк ĕçпе пулсан начальникĕ килсе çӳремĕччĕ. Ха, ĕçтереççĕ. Хăтăлса юласшăн...»

Тепĕр кун ирхине ял карчăкĕсем татах хыпар илтрĕç: Маюкпа амăшĕ, милици начальникне хăналаса, тĕрмерен хăтăлса юлнă иккен.

— Хăналаса?! Ĕçтерсе?! — тарăхса кайрĕ хăлхасăр Укçине, Кĕтерук сăмахне итлесе пĕтерсен. — Маюк Тукасри Микихвер ачине, Сашăна, качча каять! Иртнĕ каç вĕсем начальникĕпе пĕрле Маюксем патне кайса çураçнă. Ак, тин çеç-ха Маюк амăшĕ манран

туй валли икерчĕ пĕçерме çĕпре илсе кайрĕ. Намăса пĕлмесĕр элек сарса çÿретĕн! Ма сан чĕлхÿ çине шĕпĕн тухмасть!

— Ку чухне мĕн пулса иртнине мур пĕлет-и, — тÿрре тухма тăрăшрĕ Кĕтеруk. — Килеççĕ те каяççĕ... Ăçтан сыхласа çитерĕн!

# РАДИОЕВЧĔ

Пĕр каçхине, музыка юратакансем ыйтнине тивĕçтерсе, радио концерт пачĕ.

— Пакшел ялĕнче пурăнакан Иван Алексеевич Пятакаев учитель ыйтнипе «Эпĕ авланасшăнччĕ вунсаккăрта чух» юрра паратпăр, — пĕлтерчĕ çепĕç сасăллă хĕрарăм-диктор. Унтан хулăн сасăллă артист мăнаçлăн юрла пуçларĕ:

> — Авланасшăнччĕ эп çамрăк чух, —
> Авлантармарĕç-çке ваттисем.
> Ĕнтĕ кайрăм вăтăртан иртсе,
> Халь те вара манăн çемье çук.

Çак юрра Пятакаев учитель ыйтнипе панине пĕлсен, пакшелсем кăна мар, кÿршĕллĕ ытти ял çыннисем те шалтах тĕлĕнчĕç.

Ара, тĕлĕнмесĕр, тĕлĕнмеллех çав. Юрату юрри итлеме мар, авланас пирки сăмах хускатсан та, Иван Алексеевич ушкăнран пăрăнса утатчĕ. Утмăлалла çитсе пыратчĕ пулин те, авланмасăр пурăнатчĕ. Пурăнать сĕм пĕччен йăвари упа пек. Кÿрши-арши калалă тăрăх, хĕллехи сивĕ кунсенче те кăмакине ик-виçĕ кунта çеç пĕрре хутса ăшăткалать. Ĕретлĕ апат пĕçерсе çини те çук.

Паллă ĕнтĕ, ват хусах пирки тĕр-тĕр сăмах çÿретех. «Амăшĕ ăна юратнă хĕрне качча илтермен, çавăнпа Иван Алексеевич авланмасăр юлнă», — теççĕ пĕрисем. «Тен, вăл арçын урапи çине лекеймен?» — иккĕленеççĕ теприсем. «Çук, пустуй калаçатăр, йĕркеллĕ çынах вăл, — хирĕçлеççĕ виççĕмĕшсем. — Темиçе çул каярах Арçук матки патне çÿрекелетчĕ-çке... Йĕркесĕр пулсан, ма кайĕччĕ вăл тăлăх арăм патне?» «Халь вара хĕрарăмсемпе пач сыхăнмасăр упа пек сĕм пĕччен пурăнать пулсан, радиопа юрату юрри пама ыйтнине мĕнле ăнланмалла?» — тĕлĕнеççĕ пурте.

Тепĕр виçĕ кунтан яла тата тĕлĕнтермĕшрех хыпар сарăлчĕ: Иван Алексеевич авланнă имĕш! Хăйпе пĕр шкулта ĕçлекен Анна Петровнăна качча илнĕ! Иван Алексеевич хунĕшĕ — Семен Лукич Пичуркин — кĕрÿшĕнчен темиçе çул çамрăкрах-мĕн.

Çак хыпарсене ĕненменнисем те пулчĕç. Анчах — факт. Уроксем пĕтсен, Иван Алексеевичпа Анна Петровна хулран тытăнсах килнелле утаççĕ. Шкулта та кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче шур кулачпа какай пĕрлех çиеççĕ.

Иккĕленекенсем ял Советне кайса пăхрĕç. Пятакаевпа Пичуркина саккун йĕркипех çырăннă иккен.

Пакшелсем те ытти ял çыннисем пекех: пĕр-пĕр пулса иртнĕ ĕç

пирки малтанлăха тĕлĕнсе пурăнаççĕ те тăра-киле ун çинчен тăнчах манаççĕ. Иван Алексеевич хăйĕнчен чылай çамрăк учительницăна качча илни пирки те пурăна киле сăмах-юмах çӳретме пăрахрĕç. Çапах, темĕнле сăпай пулсан та, Иван Алексеевич та хăй саккунлă авланнине ĕмĕр асăнмалăх паллă тума шутлать. Ыран канмалли кун тенĕ каç хăна пухать. Арăмĕ енчен виçĕ мăшăр, хăй енчен виçĕ мăшăр чĕнет.

Хăнасем «йӳçĕ!», «йӳçĕ!» тесе кăшкăрма пуçлаççĕ çеç, пӳлĕме Борис Кузьмич пырса кĕрет. Аллинче хăйĕн — пысăк торт.

— Мăшăрланнă ятпа чунтан саламлатăп, — тет вăл, тортне Анна Петровнăна тыттарса, — иксĕре те ырлăх-сывлăх, телей сунатăп.

Борис Кузьмич Иван Алексеевичпа кӳршĕллĕ пурăнать. Иван Алексеевич Борис Кузьмича йыхрав яман. Иккĕшин хушшинче тахçантанпах килĕшӳ çук вĕсен. Мĕншĕнне хăйсем те тахçанах маннă. Ĕçмелли шыва та пĕр пусăранах ăсаççĕ, пахчана тухсан та, урамра та тăтăшах кураççĕ, анчах пĕр-пĕрне сывлăх сунма мар, куçран та пăхмаççĕ.

Пятакаев хăй юратман, хăй чĕнмен çын пырса кĕрсен, аптрасах ӳкет, ним тума пĕлмест. Унтан сасартăк Борис Кузьмича хулĕнчен çатăрласа ярса тытать те тулалла сĕтĕре пуçлать.

— Эс манран кулма шут тытрăн-и-ха! — тет хăй, шăл витĕр шăхăрттарса. — Тасал куçран!

Борис Кузьмич Иван Алексеевичран çамрăкрах та, вăйлăрах та ĕнтĕ, çавăнпа ватă учителе, хăйне унталла-кунталла вылянтарма та пултармалла пек. Анчах çенĕкре шуйханнă, тĕпĕртетнĕ сасă илтĕнмерĕ.

Тепĕр вунă минутран, иккĕшĕ те йăл-йăл кулкаласа, пӳрте кĕчĕç. Борис Кузьмич тортне сĕтел çине хучĕ, Иван Алексеевич икĕ фужер «пепси-кола» тултарчĕ, шаккаса шалтах ĕçсе ячĕç.

— Рехмет сана, юлташăм, — ыталаса саврĕ Иван Алексеевич хăйĕн кӳршине. — Виличчен та манмăп!

Пĕрне-пĕри хисеплемен икĕ çын сасартăк пĕр чĕлхе тупни тепĕртакран тин паллă пулчĕ. «Эпĕ авланасшăнччĕ» юрра итлесси Иван Алексеевичăн асра та пулман иккен. Çав юрра радиопа Пятакаев ячĕпе юрласа пама ыйтса çыраканĕ Борис Кузьмич пулнă. Чаплă артист юрласа панине итленĕ хыççăн Иван Алексеевич тӳсеймен — авланнă. Хăйĕнчен ыйтмасăрах евчĕ пулнăшăн Иван Алексеевич халĕ Борис Кузьмичпа радиона чĕререн тав тăвать.

# МАКÇĂМ МУЧИ ТИВЛЕЧĔ

Эпĕ — районти пĕр пĕчĕк кантурăн шут ĕçлевçийĕ. Ĕçĕ ĕнтĕ, йӳнĕскер çеç, шăлавар çĕтнин хакне те кăлараймасть. Мĕн калас, хăнăхнă ĕç те, пурăнатăп çапла йӳнеçкелесе.

Районти учрежденисенче ĕçлекенсем паллаççĕ-ха мана, анчах, хам сывлăх сунмасан, «здрасте» текен никамах та çук. Килте шăкăлшăкăл калаçса ларнă чух, тӳсеймерĕм, çакăн çинчен арăма каласа патăм.

— Шлепке илсе тăхăн,—ăс пачĕ вăл мана, — ун чух сана пурте пуçлăх вырăнне йышăнĕç, сывлăх сунĕç...

Пĕррехинче мана Пакăш ялне командировкăна ячĕç. Район центрĕнчен вăтăр çухрăмра вырнаçнă яла, автобус çӳременнине пула; аран çитсе ӳкрĕм.

Пырса кĕтĕм кăна урама, — вăт, тĕлĕнтермĕш! — кашни хирĕç пулакан çын карттусне хывса, пуçне тайса саламлать мана. «Нивушлĕ шлепке пулăшрĕ?» — шухăшлатăп хам, çулваррипе мăнаçлăн утса.

Колхоз председателĕ те, ун кабинетне кĕрсен, ури çине тăрсах, атте ятне асăнсах, алă тытсах сывлăх сунчĕ, çемçе диван çине ларма сĕнчĕ. Кун пек чыс халиччен нихăçан та курманччĕ-ха эпĕ. Хамран хам тĕлĕнетĕп: ан тив, урамра тĕл пулнă çынсем мана палламаççĕ тейĕпĕр, колхоз председателĕ эпĕ камне лайăх пĕлет вĕт-ха?

Еç пĕтернĕ хыççăн район центрне каялла кайма тухсан, клуб пуçлăхĕпе пĕрле утма тӳр килчĕ. Сăмах май Пакăш çыннисем питĕ сăпайлă, культурăллă пулни çинчен асăнтăм.

— Макçăм мучи тивлечĕ ку, — ăнлантарчĕ клуб пуçлăхĕ мана.

Эпĕ Макçăм Реймова тахçантанпах пĕлетĕп-ха, вăл сакăрвунă çулсене çывхарса пырать. Вăтăрмĕш çулсенче колхоз йĕркелес ĕçе активлă хутшăннă.

— Çынсем пĕр-пĕринпе культурăллă пулнинче Макçăм мучин мĕнле тивлет пур-ха вара? — ыйтмасăр тӳсеймерĕм эпĕ.

— Пур çав... — пысăк пĕлтерĕшлĕн тавăрчĕ мана клуб пуçлăхĕ. — Пĕррехинче, ял пухăвĕнче тĕрлĕрен ыйтусем сӳтсе явнă хыççăн, пухăва пынă çынсене тахăшĕ лекци вуласа панă. Культура пирки калаçнă май этика, мораль, нравственность ыйтăвĕсене хускатнă, çынсен пĕр-пĕринпе мĕнле пулмалли, камăн сывлăх малтантарах сунмалли пирки тавлашса кайнă.

Ыйтусем те нумай панă, анчах вĕçне-хĕрне пурпĕр тупса пĕтереймен.

Çак ыйтăва Макçăм мучи татса панă вара:

— Ман шутпа, — тенĕ вăл, ватлăхне кура мар çирĕп сасăпа,— кам хăйне хăй хисеплет, кам хăйне хăй мăнна хумасть, кам ăслă, çав маларах сывлăх сунать, маларах саламлать...

Çакна илтсен, ман питĕм вутпа тĕртнĕ пек пĕçерсе кайрĕ, сылтăм алă хăй тĕллĕнех пуç çинчи шлепке патнелле çĕкленчĕ.

# ЁНСЕРЕН ПАНĂ ПРЕМИ

Колхоз правленийĕнче техничкăра ĕçлекен Праски инке профессор пекех темĕн те пĕлет.

— Паян пĕр автомашина Патăръелне каять, — пĕлтерет вăл кашни тĕл пулакан çыннах, — ыттисемпе хире тислĕк кăлараççĕ. Хветута аслă конюхран кăларма йышăнчĕç. Симун бригадира хытă ятларĕç...

Праски инке чылайранпа ĕçлет ĕнтĕ ку ĕçре. Хăйĕн ĕçне юратать, тирпейлĕ тăвать. Анчах пĕчĕк кăлтăк пур унăн: чĕлхин чаракĕ

çукрах, никам ыйтмасăрах пурин çинчен те каласа парать. Ялта ахальтен мар ăна ятпа асăнмаççĕ, «вырăнти радио» теççĕ.

— Миккуль, ачам, чуптаран пуль, председатель чĕнет. Темшĕн аслисем курайми пулчĕç сана, унччен хисеплетчĕç... — пĕлтерчĕ Праски колхоз ветфельдшерне пĕррехинче.

— Ун пек-кун пеккине туймастăп, — тавăрчĕ ăна Кайдураев.— Ятлакаланисем пулкаласçĕ-ха. Ĕçре тупăнать ĕнтĕ вăл.

— Темиçе кун каялла правлени ларăвĕнче калаçнине илтрĕм,— хăйĕннех печĕ Праски инке. — Сергей Павăлч сан пирки: Кайдураева ĕнсерен пама тивет пуль, терĕ. Ферма пуçлăхĕпе партком секретарĕ те ун сăмахĕпе килĕшрĕç. Паян акă, хăвна чĕнтерет. Çавăн пиркиех пуль-ха.

Кайдураев йăлт шухăша путрĕ. Ĕçрен кăларма сăлтав çук пек туйăнать ăна. Нимĕнле усал ĕç те туман вăл. Анчах... сасартăк аса илех кайрĕ: ĕлĕксенче ăна çулсеренех преми параканччĕ, кăçал вара пăмарĕç — ветсанитара пачĕç. Халиччен вăл кун çинчен тĕплĕ шухăшласа та пăхманччĕ. Халь ĕнтĕ тинех ăнланчĕ: ăна ĕçрен кăларма хатĕрленеççĕ иккен.

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп, Сергей Павлович, эсир мана мĕншĕн чĕнтернине, — терĕ Кайдураев председатель кабинетне кĕнĕ-кĕмен.

—Мĕншĕн чĕнтернĕ пулĕ тесе шутлатăр, Николай Алексеевич?— куларах ыйтрĕ председатель.

— Илтрĕм. Ун пек сăмах час сарăлать, — кăмăлсăррăн хуравларĕ Кайдураев. — Эсир мана лайăхах парасшăн имĕш ĕнсерен.

— Тĕрĕс.

— Анчах, Сергей Павлович, йăнăшатăр эсир. Апла тума сирĕн нимĕнле сăлтав та çук.

— Ытлашши сăпайланма кирлĕ мар, Николай Алексеевич. Правлени сирĕн ĕçĕре аван пĕлет. Партком та çаплах шутлать.

— Юрать. Эпĕ питех тавлашмăп. Ĕç тупăп-ха ăçта та пулин урăх çĕрте. Эсир йăнăшатăр, Сергей Павлович.

— Эсир, Николай Алексеевич, каçарăр пире, эпир чăнласах йăнăшнă. Халь çав йăнăша тӳрлетме шутларăмăр. Акă, илĕр, сире правлени алла çыхмалли сехет парнелет.

Кайдураев нимĕн те ăнланаймарĕ. «Ĕнсерен туянма» килнĕччĕ те... хаклă парне параççĕ!

Каярах тин тĕпĕ-йĕрĕ палăрчĕ. Колхоз ĕçченĕсене преми пама йышăннă чухне Кайдураев хушаматне асăрхамасăр сиктерсе хăварнă иккен. Тепĕр темиçе кунтан çак йăнăша асăрханă та, анчах преми фончĕ йăлтах пĕтнĕ пулнă. Правленин тепĕр ларăвĕнче Кайдураева преми пама «тĕкĕнми запасран» илме йышăннă. Праски инке «ЭНЗЕрен» сăмаха «ĕнсерен» тенĕ пек ăнланнă.

Çак мыскара хыççăн «радиостанци» те хăйĕн передачисене палăрмаллах чакарчĕ.

# ШĂЛĔ ВИТМЕННИПЕ

Хăй вăл Альтук ятлă, анчах ялта ăна никам та ятран чĕнмест. Сехенер теççĕ. Мĕн вăл Сехенер, мĕне пĕлтерет, ăçтан тухнă? Никам та пĕлмест.

Пĕчченех пурăнать вăл килĕнче. Ывăл ачи, ӳссе çитĕнсен, амăшĕпе килĕштерейменнине пула, хулана тухса кайнă, халĕ хăй çемьеллĕ ĕнтĕ. Пĕррехинче арăмĕпе ачине яла илсе килнĕччĕ вăл. Амăшĕ килне кĕртменнипе, тăванĕсем патĕнче пĕр çĕр çывăрчĕ те каялла кайрĕ. Ун хыççăн яла пĕрре те килмен вара. Хĕрĕсем те, çитĕнсе çитсе, качча тухнă, ача-пăчаллă пулнă. Вĕсемпе те килĕштереймест Сехенер, час-час судсем-мĕнсем тăрăх сĕтĕрет, мĕн те пулин шыраса илесшĕн тепеçленет.

Пурлăхĕ çителĕклĕ Сехенерĕн. Ĕне, сурăхсем, хур-кăвакал, чăхчĕп усрать. Вутти-шанки те çителĕклех. Хăй вара саплăк çине саплăк лартнă тумтирпе çӳрет. Хăрах уринче — калуш, тепринче — пушмак.

— Аван тумланса çӳресен, арçынсем куç хывасран хăратăп, — тет вăл, лĕхĕл-лĕхĕл кулса.

Темшĕн-çке, çынсем унпа урамра тĕл пулассинчен те питĕ сыхланаççĕ. Пĕчĕк ачасем макăрма пуçласан, ача амăшĕсем: «Акă сана Сехенере леçсе паратпăр!» — тесе хăратаççĕ.

Ахалех, кирлĕ-кирлĕ маршăнах чĕрре кĕрсе каять Сехенер. Тавлашса ăна çĕнтерекен çук. Анчах пĕррехинче, кӳршĕ Крахъянпа хирĕçсе кĕрсе кайсан, Сехенер кĕтмен çĕртен «нокаута» лекет. Крахъян Сехенере путсĕр сăмахсемпе мар, вăл мĕнле çын иккенне сăнласа панипе çĕнтерет.

Крахъян, паллах, ун пеккине каçарма пултараймасть ĕнтĕ. Тепĕр куннех, автобус çине ларса, района тухса вĕçтерет. Кунти учрежденисенче вăл чылайăшĕнче пулнă: милици, халăх сучĕ, райĕçтăвком... Хальхинче Сехенер никам патне те мар, прокурор патне кĕме ĕмĕтленет. Прокурорне Сехенер курман, палламасть, анчах прокурор ĕçлекен çурта лайăх пĕлет. Акă вăл, кĕпер урлă каçсан — сулахайра, пĕрремĕш çурт.

Прокуратура çурчĕ тĕлне çитсен, Сехенер юри хытăрах уксахлама тытăнчĕ.

— Ларăр, мĕн çăмăлпаччĕ? — кăмăллăн ыйтрĕ унран хĕрĕх çулалла çитнĕ арçын.

— Вăт, ырă çыннăм, каласа парам-ха сире пĕр путсĕр хĕрарăм çинчен. Мана вăл чăтма çук мăшкăл турĕ. Çавăн пирки евитлеме килтĕм те эпĕ сан патна... Крахъян ятлă çав хĕрарăм. Манпа кӳршĕллĕ пурăнать вăл. Ăна таврара пĕлмен çын та çук. Крахъян ялта никампа та килĕштереймест, вăл вăрçман çын та юлман ялта. Акă...

— Чимĕр-ха, чимĕр, — пӳлчĕ ăна сĕтел хушшинчи этем.

— Мĕн «чимĕрĕ» пултăр унта? Пĕлетĕп, ăна начальниксем пурте юратаççĕ. Фермăра ĕçлет тесе, ун хутне кĕреççĕ. Фермăран сĕт вăрласа мĕн чухлĕ çу тунине курмаççĕ. Çав Крахъян мана...

— Ку ĕçпе ман пата мар...

— Сан патна пулмасăр кам патне каймалла-ха ман тата? Милицинчисем ун майлă, судйи те ун сăмахне ĕненет. Юри, ятарласа килтĕм эпĕ сан патна, прокурор юлташ,—чарăна пĕлми пакăлтатрĕ Сехенер.

— Чарăн-ха, тархасшăн, эпĕ прокурор...

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп эсĕ прокурор иккенне. Çавăнпа килнĕ те ĕнтĕ эпĕ кунта. Çав Крахъян мана колхоз председателĕпе хăратса пурăнать. Упăшкаллă, ача-пăчаллă пулин те, председательпе ермешсе кайнă хăй...

— Çитет, çитет!

— Нимĕн те çитмест. Ĕнесем валли хатĕрленĕ çĕрулмине иртнĕ кĕркунне мĕн чухлĕ йăтрĕ вăл килне, э? Халăх пĕлмест тетĕр-им?

Пӗлетпӗр, йӑлтах пӗлетпӗр.

— Кирлӗ мар...

— Епле кирлӗ мар пултӑр? Вӑл, Крахъян, тем те тӑвать иккен, ҫынсенчен куҫ кӗретех кулать, мӑшкӑллать. Ашшӗ ҫӗрме пуян пулнӑ та, ыттисене ним выраннe те хумасть халь вӑл. Пирӗн ялпа Крахъян ӳснӗ ял хушши инҫе мар, пурӗ те виҫӗ ҫухрӑм кӑна, пӗлетпӗр кам мӗнле пурӑннине. Ун ашшӗ-амӑшӗ кулак пулнӑ! Вӑт мӗнле!

— Эпӗ про...

— Каллех хӑвӑнне перетӗн эсӗ: прокурор та прокурор! Прокурок-тӑк, хупӑр Крахъяна тӗрмене!

— Ӑнлантӑм!

Сӗтел хушшинчи ҫын «ӑнлантӑм» тесен, Сехенер чӗри лӑштах кайрӗ, вӑхӑтлӑха шӑпланчӗ.

— Ӑнлантӑм, — малаллах тӑсрӗ сӑмахне сӗтел хушшинчи. — Эсӗ, Альтук инке, йӑнӑш кӗнӗ. Эпӗ прокурор мар. Прокурор ку ҫуртран урӑх ҫӗре куҫни икӗ уйӑх ытла ӗнтӗ. Кунта хатӗрлев кантурӗ. Ҫӑм, выльӑх тирӗ, ҫӗтӗк тата ытти ҫавӑн пеккисем пухатпӑр эпир. Ҫав кантур пуҫлӑхӗ эпӗ.

— Мана вара ӑҫтан паллатӑн-ха эс? — тӗлӗнчӗ Сехенер.

— Палламасӑр, паллатӑп ҫав. Эпӗ Крахъян шӑллӗ пулатӑп. Эсӗ пирӗн атте-аннене те «кулак пулнӑ» тесе ахалех ҫылӑха кӗретӗн. Нихӑҫан та вӗсем кулак тавраш пулман. Эсӗ каланисене, паллах, эпӗ ӗненместӗп. Ҫапах та, аппана курсан, кӳршӗ-аршӑсемпе аван пурӑнма кирли ҫинчен асӑрхаттарӑп. Эсӗ хӑвӑн ҫӑхавупа прокурор патне кай. Вӑл халь клуб ҫумӗнчи икӗ хутлӑ чул ҫуртра ӗҫлет.

— Эс вара Макҫӑм пулатӑн-и? Ак тамаша, тем курса тӑрӑн пурнӑҫра! — аллисене шарт! ҫапрӗ Сехенер, унтан тулалла ҫӗмӗрен пек тухса вирхӗнчӗ.

# «ЖИГУЛИ» ТУЯНАЙМАРӖ

Раман пурнӑҫӗ ытарма ҫук лайӑх шума тытӑнчӗ. Ҫу сӗрнӗ кустӑрма пекех. Колхозниксене правлени нарядӗпе вутӑ кӳрсе парать-и, улӑм е утӑ турттарма килет-и — икшер-виҫшер тенкӗ хӑйпӑтса тухать. Е ҫул ҫинче ҫынсене лартать — каллех тупӑш. «Ачасене канфет илсе пама юрӗ», — текелет кун пек чух Раман. Хӑй ӑшӗнче вара пачах урӑхла шухӑшлать: «Еҫ кун пекех ӑнӑҫлӑ пырсан, хам валли «Жигули» илмелӗх укҫа пухатӑпах», — тет.

Пӗррехинче руль тытса пынӑ чух, пуяс шухӑш минретнипе пулас, ял вӗҫӗнче ҫӳрекен пӗр пысӑк сыснана таптарӗ те вӗлерчӗ Раман. Анчах капан пек выртакан сысна умӗнче тӑнинчен усси пулас ҫуккине часах туйса илчӗ вӑл, ҫавӑнпа машинӑна хӑпӑл-хапӑл кӗрсе ларчӗ те, вӗҫтере пачӗ хӑйсен ялнелле.

Инҫех те кайманччӗ, ҫул хӗрринчи ял пуҫӗнче сенкер тутӑрлӑ хӗр тӑнине асӑрхарӗ. Ахӑртнех, таҫта кайма пуҫтарӑннӑ чиперкке. Раман унран тӑвӑл пек вӗҫтерсе иртесшӗнччӗ, анчах май килмерӗ, аллинче пӗчӗкҫӗ хӗрлӗ кӗнеке пуррине курчӗ. «Мур илесшӗ, обществӑлла йӗркепе ӗҫлекен автоинспектор вӗт ку!» — вӗлтлетрӗ шухӑш ун пуҫӗнче.

— Э, шофер тус, сан кабина пушах иккен-ха, — терӗ те хӗр, йӑпӑр-япӑр шофер ҫумне кӗрсе ларчӗ.

— Ăçта çитиччен? — сиввĕн ыйтрĕ Раман.
— Арапуçне кăна, — кăмăллăн тавăрчĕ хĕрача.
— Мĕн ĕçлетĕр?
— Колхозра, звеньевойра... Звенора пуху ирттертĕмĕр те, киле таврăнатăп.
— Мĕнле пуху?
— ДОСААФ членĕсен пухăвĕ.
— Паçăр аллăрта мĕнле хĕрлĕ кĕнеке тытса тăраттăр эсир?
— Пĕлетĕп сире, шоферсене, — йăвашшăн кулчĕ хĕрача. — Алă пуша пулсан, чарасшăнах мар машинăна. ДОСААФ билетне кăтартрăм.
Раман сасартăк машинăна чарчĕ те сылтăм енчи алăка яриех уçса ячĕ.
— Ан, халех куç умĕнчен тасал! — кăшкăрса пăрахрĕ вăл.
— Йĕркеллĕ пулăр ĕнтĕ, шофер юлташ, — аванмарланнă пек пулчĕ хĕрача. — Эпĕ сана укçа тӳлетĕп-çке. Акă, ме пĕр тенкĕ.
— Паçăрах çапла каламаллаччĕ те, — сасартăк йăвашланчĕ Раман, — тупнă ДОСААФ билечĕпе хăратма.
Яла кĕме кăна ĕлкĕрнĕччĕ, машина умне икĕ арçын тухса тăчĕç. Машинăна ирĕксĕрех чарма тиврĕ.
— Эпĕ автоинспекцин обществăлла контролерĕ, — терĕ хĕрача, хĕрлĕ хуплашкаллă пĕчĕк кĕнекене кăкăрти кĕсйинчен кăларса. — Машинна çавăр та, эс таптаса вĕлернĕ сысна патне кайăпăр...
Раман машинăпа сысна таптаса вĕлерни çинчен кунта телефонпа пĕлтерме ĕлкĕрнĕ-мĕн. Уй хапхи патне тухнă икĕ арçын дружинниксем иккен.
Çăткăн шоферăн пуçĕнчен «Жигули» шухăшĕ пачах тухса ӳкрĕ вара.

# ТУПСĂМНЕ ТУПАСШĂН

Пилĕк çулхи Вова теттесемпе выляса ларать.
— Анне, шуйттан вăйлă-и вăл? — кĕтмен çĕртен ыйтать амăшĕнчен хайхи.
— Вова, мĕн калаçатăн эсĕ? — тĕлĕнет амăшĕ. — Нимĕнле шуйттан та çук. Çынсене хăратас тесе çеç калаççĕ ăна.
Вова пăртак вылякалать те, каллех ыйтать:
— Чи аслă шуйттанăн миçе мăйрака?
— Тĕлĕнтеретĕн эсĕ, Вова, — тавăрать ăна амăшĕ. — Çук шуйттанăн мĕн мăйраки пултăр? Кам каласа парать сана çавăн пек кирлĕ мар япаласене?
— Ара, аттепе ятлаçнă чух хăв яланах: сана çичĕ мăйракаллă шуйттан та юрас çук, тетĕн те...

# ТАВÇĂРУЛĂХ

Лавккара çăхав кĕнеки çакăнса тăрать. Çич-сакăр çулхи арçын ача кĕнеке патнелле кармашать-кармашать, анчах алли çитеймест, кĕнекене илеймест.

— Инке, — тет ача лавккана пынă пĕр хĕрарăма, — çав хытă хуплашкаллă тетраде илсе пар-ха?

— Мĕн çырасшăн-ха ку пĕчĕк ача çăхав кĕнекине? — тĕлĕнсе илсе парать ăна сутуçă.

Ача кĕнеке варринчи икĕ листине татса илет те, карттусĕ ăшĕнчи канфечĕсене чĕркесе, килнелле вĕçтере парать.

# ЕРÇЎСЕР ÇЫН

— Коля, эс вăтам шкул пĕтерни çулталăк иртрĕ ĕнтĕ, анчах ни ĕçлеместĕн, ни вĕренме каймастăн? Мĕн пулчĕ сана капла?

— Нимĕн те пулман. Шухăшлатăп-ха эпĕ, ерçместĕп.

— Мĕн шухăшлатăн?

— Харампырсем çинчен фельетон çырасшăн та, кам çинчен çырас-ши, тесе шухăшлатăп.

# ÇУЛЛĂ ПĂТĂ

Пĕр карчăкăн икĕ кĕрў пулнă. Пĕр кĕрўшне чунтан юратнă вăл, теприне — кăмăлламан.

Карчăк патне юратнă кĕрўшĕ пырать. Вăл ăна вир пăттипе хăналама сĕтел хушшине лартать. Кĕтмен çĕртен юратман кĕрўшĕ те персе çитет. Ним тума та çук, карчăкăн ăна та сĕтел хушшине лартма тивет. Анчах чеелле хăналать: юратнă кĕрўшĕ умне çу чышкăнтарать те чышкăнтарать, теприн умне пĕрре те ямасть. Юратман кĕрўшĕ те айван пулман иккен.

— Ку тирĕке эсир мĕн хакпа туяннă çак? Ай-ай, хитре! — текелесе, çу янă вырăна хăй умнелле çавăрса лартать те, пăтта васкавлăн пĕтĕрме тытăнать.

# МЕСЛЕТНЕ ПĔЛМЕЛЛЕ

— Атя, столовăя кайса апат çисе килер? — сĕнет Илле хăйĕн тусне Микулая.

—Çук, манăн вăл столовăя каяс килмест, — тавăрать лешĕ.

— Мĕншĕн тата?

— Унта официанткăсем час çитермеççĕ. Пĕçерессе те техĕмлĕ пĕçермеççĕ.

— Эсĕ меслетне пĕлместĕн, — йăл-йăл çиçет Илле, — атя хампа пĕрле, вĕрентĕп...

Çитеççĕ хайхисем столовăйне. Анчах, талон çыртарса илсен те, сĕтел хушшине лармаççĕ-ха.

Кĕçех столовăя пĕр самăр çын пырса кĕрет. Вăл талон тавраш ĕ çыртармасăрах сĕтел хушшине кĕрсе ларать. Илле Микулая кăлт! тĕртет те самăр çын çумне пырса ларать.

Апатланса тухнă хыççăн Микулай тÿсеймест хайхи:

— Чăн та хăвăрт çитерчĕç-çке. Апачĕ те лайăх, — тет. — Мĕн пулчĕ вĕсене капла?

— Каларăм-çке сана меслетне пĕлмелле тесе, — тавăрать ăна Илле. — Райпо председателĕ е тĕп бухгалтерĕ аçата хăш вăхăтра килессе çеç пĕлмелле, вара çав сĕтел хушшине лармалла. Ĕçĕ те пĕтнĕ.

# ЧĂРĂШ ТĂРРИНЧИ ВĂРĂМТУНАСЕМ

Районри канашлуран таврăннă чухне, вăхăт ирттермелле тенĕ пек, икĕ колхоз председателĕ уни-куни калаçса пыраççĕ.

— Пирĕн ялта Хĕветĕрпе Петĕр ятлă ватă çынсем пур, — тет пĕри. — Иккĕшĕ те хăрах куçлă. Вĕсем те пулин япăх кураççĕ, урам урлăшĕнчен йытăпа сурăха та палласа илеймеççĕ. Пĕрре çаппа, Петĕрпе Хĕветĕр вăрманпа утса пынă. «Хĕветĕр,—тенĕ Петĕр,— сан куçу аван курать-и?» «Ӳпкелеместĕп, — тавăрнă ăна Хĕветĕр. — Авă, чăрăш тăрринче вăрăмтуна ларать. Çавна та куратăп. Эсĕ куратăн-и?» «Куратăп эпĕ те. Вăрăмтуни хамăр пекех иккен, хăрах куçлăскер», — хуравланă Петĕр.

Пырсан-пырсан председательсем колхозĕсен ĕçĕсем çинчен калаçа пуçлаççĕ.

— Итле-ха, Иван Исакăч, — аякĕнчен кăлт! тĕртет Питрав Петрович хăйĕн тусне, — чăннипе калас-тăк, тырпулăмăра сăмах панă чухлех туса илеймерĕмĕр вĕт, э? Сирĕн ав, пирĕннинчен те сахалтарах. Çапах, обязательствăна çĕр çирĕм процент пурнăçларăмăр тесе, тухса калаçрăн. Ăçтан тупрăн эс çав цифрăна?

— Хăв та обязательствăна çĕр проценчĕпех пурнăçларăмăр, терĕн-çке? — йăл-йăл кулать Иван Исакиевич. — Ху ăçтан илтĕн эппин?

— Хм... Ну, маччаран тейĕпĕр... Эс ăçтан?

— Эпĕ-и? Эп — вăрăмтуна ларакан чăрăш тăрринчен...

# ХӲРИ ВĔÇНЕ ТУЙ КИЛСЕН

### ПЬЕСАРИ ÇЫНСЕМ:

**Крахъян** — 50 çулалла çитнĕ хĕрарăм, шăрчăкскер.
**Маша** — Крахъян хĕрĕ, 19 çулта.
**Хветура** — Крахъянпа пĕр çулсенчи хĕрарăм.
**Çеркуш** — Хветура ывăлĕ, 20 çулта.
**Укахви** — ватă карчăк, Крахъян кÿрши.

**Крахъянсен пӳрчĕ. Урамалла — икĕ чӳрече, чӳречесем хушшинче — пысăк тĕкĕр. Сулахайра — алăк. Сылтăм кĕтесе чаршавпа карнă, унта — Маша вырăнĕ. Сĕтел, пукансем, арча. Пӳртре — Крахъянпа Хветура.**

КРАХЪЯН. Вăхăта пустуй ирттерсе ан çӳре, Хветура. Пĕркунах татса каларăм. Ан та ӳкĕтле, нимĕн те ĕç тухмасть.

ХВЕТУРА. Ара, аплине апла пуль те-ха... Авалхи йăла çавăн пек-çке. Хуçи япали хакне ӳстерсе ыйтать, илекенĕ илесшĕн хаклашать.

КРАХЪЯН. Ан та калаç! Калаçса çăвар сĕткенне те сая ямастăп. Çавăн пек ылтăн чăмăрккине сирĕн алла парас-и-ха? Çук! Çук! Çук!

ХВЕТУРА. Тен, калаçса татăлăпăр?

КРАХЪЯН. Миçе хут килтĕн ĕнтĕ? Миçе хут каламалла сана?

ХВЕТУРА. Ара, кун пек ĕçпе ик-виçĕ хут килесси вăл — ваттисенчен тухнă йăла. Усалли ним те çук пуль унта?

КРАХЪЯН. Усалли, усалли! **(Ура çине сиксе тăрать те тăрст! тапать.)** Нихçан та! Ĕмĕрне те ман Маша Сенĕксен кинĕ пулмасть! Хĕвел сӳнсе ларсан та!

ХВЕТУРА. Чим-ха, Крахъян, эпĕ сан патна пĕртте вăрçас шутпа килменччĕ. Ахалех çил вĕçтерсе тăман кăларатăн. Ирĕксĕрлесе Машăна хамăр пата илсе каяс шухăшăм çук ман. Çамрăксем хăйсем килĕштереççĕ те-ха. Çеркуш ăнтан ярать: амăшĕпе кайса калаç та кайса калаç, тет. Тепле пулсан та, вунă çул пĕрле шкула чупса пушмак çĕтнĕ, пĕр-пĕрне лайăхах пĕлеççĕ ĕнтĕ.

КРАХЪЯН. Мĕн терĕн эсĕ, э? Тепре кала-ха! Ачисем килĕштереççĕ терĕн-и? Чăнласах апла хăтланас пулсан, у-у-ух эпĕ ăна! Самантрах пĕтерсе тăкатăп! **(Чышкине чăмăртаса Хветура патне пырать.)** Суятăн эсĕ, суятăн! Ман хĕрача Сенĕк Çеркушĕпе килĕштерсе пурăнма мар, унпала пĕр çуна çинче те ларса пырас çук!

ХВЕТУРА. Ман Çеркуш ара...

КРАХЪЯН **(Хветурана пӳлсе).** Ман Çеркуш та ман Çеркуш! Мĕнех вара сан Çеркушу? Колхоз лашисене пăхни хăвăра темле пархатарлă ĕç тунă пек туйăнать пуль ĕнтĕ. Ман Маша, пукранимĕр, хĕр-тĕк хĕр! Акă, часах районта курс пĕтерет те, лавккара сутуçă пулать. Чейĕ-сахăрĕ, пусми-таварĕ — йăлтах ал айĕнче!

ХВЕТУРА. Кăлăхах хăртатăн эсĕ мана, Крахъян. Ан тив, ман ывăл лаша çеç пăхтăр. Пурнăçра пĕлме кансĕр. Ахальтен каламан пулĕ ваттисем: пурнăç тăршшĕ вĕрен тăршшĕ мар, тесе. Паян лаша пăхать, ыран — ферма заведующийĕ е зоотехник. Институтăн икĕ курсне, заочнă теççĕ-и ăна, чиперех пĕтерсе килчĕ-ха.

КРАХЪЯН. Институт, зоотехник!.. Мĕне кирлĕ вĕсем? Мана сирĕн ратне кăмăла каймасть. Ман Мирун та юратмастчĕ сире. Сенĕксемпе пĕр вăрманта вутă касма турă ан хуштăр, тетчĕ. Çитет калаçни! Урăх ман пата ура та ярса ан пуснă пултăр!

ХВЕТУРА. Каçар, Крахъян, килсе чăрмантарнăшăн, ан ятлаçсамах. Чипер юл, пирĕн пата пырса лар... **(Пуç тайса тухса каять).**

КРАХЪЯН. Пырса лар... Пит кирлĕ пуль сан патна çӳресе вăхăт сая яма!

**Çав пӳлĕмех. Шукăль тумланнă Маша тĕкĕр умĕнче тирпейленет.**

МАША (**юрлать**). Лутраях та шĕшкĕ, сарă мăйăр,

Авса татаймасăр каç турăм.
Тăванăм, тăванăм, мĕн тăвас?
Мăйăр катса тĕш тăвас.
Тусăм, тусăм, мĕн тăвас?
Ыталаса чуптăвас!

**Инçетре аслати кĕрлени илтĕнет.**

МАША (**чӳречерен пăхса**). Анне каççăр килместĕп тесе тухса кайрĕ. У-ух, Шетмĕ енче çумăр ишет! Капла анне таврăнаймĕ те, каç та выртĕ... Епле аван пулнă пулĕччĕ! (**Аллине çыхнă сехетне пăхать.**) Кĕçех Çеркуш та килмелле. Эх, курас килет-çке! Курманни виççĕмĕш кун вĕт! Вăл киличчен шуртан хур чĕпписене хăваласа килем-ха. Тен, çумăрĕ кунта та персе çитĕ те, йĕпенсе пĕтĕп. (**Çийĕнчи лайăх кĕпипе тутăрне тĕкĕр умне çакать, арчаран кивĕрех кĕпе кăларса тăхăнать, тутăр çыхать. Тухса каять. Пĕр хушă шăп.**

**Крахъян килсе кĕрет, çумăр айне пулнă, çипуçĕ — йĕп-йĕпе.**

КРАХЪЯН. Ак тамаша, пирĕн ялта çумăр пачах та çуман. Юри, манран мăшкăлланă пекех, лӳшкетрĕ. Юрать-ха, çумăр пуçланиччен тухрăм. Маларах тухман пулсан, çĕр выртма тиветчĕ. Пĕрре çул çине тухсан, утатăн та утатăн çав, çумăр çăвать тесе пăхса тăмастăн. Турра шĕкĕр, киле çитрĕм-çитрĕмех. Ывăнасса та ывăнтăм вара хам. Текех çамрăк мар çав. Чим, ку йĕпе çипуçпа шăнса пăсăлăн тата. Кĕпене хывса çенĕке çакса хурам-ха, унта çил те вĕркелет, типме те хăвăртрах типĕ. (**Çенĕке тухса йĕпе кĕпипе тутăрне çакса кĕрет.**) Эй-яй-яй, шалт халтан кайрăм. Ватă шăмшакăм та сурать. Хам вырăна тирпейлесе тăриччен Маша вырăнĕ çине выртса канам-ха. (**Чаршав хыçне кĕрсе çухалать.**)

**Пĕр хушă шăплăх тăрать. Кĕçех чаршав хыçĕнчен Крахъян харлаттарни илтĕне пуçлать. Алăка ерипен уçса, Çеркуш кĕрет. Ункун пăхкаласа илет. Шалти пӳлĕмелле карăнса пăхать.**

ÇЕРКУШ. И-ивук, Маша! Аçта пытантăн-ха, чунăм? (**Тĕкĕр патĕнче Маша кĕпипе тутăрĕ çакăнса тăнине курать.**) Аха, канма выртнă иккен. (**Йăпшăнса пырать те аллине чаршав ăшне чикет.**) Кăт-кăтик, кăт-кăтик! Ма чĕнместĕн, э? Юри туймăш пулса выртатăн пулать ĕнтĕ. Эсĕ кăтăклă пулаканччĕ-ха. Аçта кайса кĕнĕ санăн кăтăку? Кăт-кăтик!

**Чаршав хыçĕнчен Крахъян сиксе тухать те Çеркуша ярса тытать.**

КРАХЪЯН. Парăп сана кăт-кăтик! Эсремет çури!

ÇЕРКУШ (**кукленсе ларать**). Пĕтрĕ пуç!

КРАХЪЯН. Эсĕ халĕ те пăрахмастăн-и-ха манăн хĕр пуçне çавăрма? **(Çеркуша çӳçĕнчен лăскать.)** Аннӳ пур аннӳ йăлтах йăлăхтарса çитерчĕ. Пĕрмай йăрккать. Урăхран пирĕн кил таврашне çывăха ан пынă пултăр! Шалчапа чышса вĕлерĕп! Ханттар! Пĕлетĕн-и, эсĕ ман хĕртен пĕр çул аслă! Нихçан та памастăп сана хам хĕре! Тухса кай ман килтен! Тасал! Тасал! **(Чыша-чыша кăларса ярать.)**

## ВИÇÇĔМĔШ КУРĂНУ

**Темиçе кун иртнĕ. Çав пӳлĕмех. Крахъян пĕчченех. Канăçсăр. Вăхăт-вăхăт чӳречерен пырса пăхать.**

КРАХЪЯН. Каласа ятăм: пĕр кун кăна пурăн, тепĕр куннех киле таврăн, терĕм. Виççĕмĕш кун çук ĕнтĕ. Урине аппа: çĕрулми кăларма яр та яр, терĕ те. Тен, ямалла та марччĕ. Халиччен темиçе пахча та кăларса пĕтерме пулать. **(Калинкке алăкне уçнă сасă илтĕнет.)** Такам килчĕ пулас-ха, çавă пуль.

**Укахви кĕрет.**

УКАХВИ. Ман килес, сывлăхсем мĕнлерех, аван пурăнаççĕ-и?

КРАХЪЯН. Турра шĕкĕр, аванах-ха. Малалла ирт.

УКАХВИ. Иртесси-мĕнĕ, эпĕ ĕçпеччĕ-ха. Ирех каçнăшăн ан çиллен, Крахъян кинĕм. Çĕрле урампа кĕрлесе туй иртсе кайрĕ те ыйхă йăлт вĕçрĕ, ун хыççăн куçа пĕрре те хупса пулмарĕ. Ахаль лариччен уйран уçлас терĕм, уйран çӳпçи илме килсеттĕм те...

КРАХЪЯН **(тĕлĕнсе)**. Туй? Мĕнле туй?

УКАХВИ. Илтмен-и вара?

КРАХЪЯН. Çĕрле урамра тем шăв-шавĕ илтĕнчĕ. Çамрăксем çуйхашаççĕ пуль терĕм. Туйне-мĕнне пĕлмерĕм. Чим, ара, кам туйĕ?

УКАХВИ. Сенĕк Çеркушĕ авланнă, теççĕ.

КРАХЪЯН **(шухăша кайса)**. Ха, Сенĕк Çеркушĕ эппин. Кама качча илнĕ-ши? Хĕрĕ хăш ял?

УКАХВИ. Килтен питех тухса çӳреместĕп те, пурне те тĕплĕн пĕлейместĕп çав.

КРАХЪЯН. Çӳçĕнчен лăска-лăсках хам хĕртен сивĕтрĕм-ха эпĕ ăна. Мĕнле айван хĕр качча тухнă-ши çав ухмаха? Эс пĕлетĕн пуль, Укахви инке, ахаль каламастăн пуль?

УКАХВИ. Çук, Крахъян кин, тупата туршăн пĕлместĕп. Илтмен. Эс пĕлетĕн пуль тесе, санран ыйтма шутларăм.

КРАХЪЯН. Кăштах тĕшмĕртетĕп-ха. Çеркушне хам Машăран сивĕтсен, амăшĕ, Хветура, аça çапманскер, урăх хĕре çураçма тытăннăччĕ пулас. Çавах-тăк, хĕр те мар вара вăл. Пичĕ-куçĕ тăсмака, лашанни евĕр. Урисем шăпах хăмăт клещи. Пилĕкĕ вуçех çук. Çавах ĕнтĕ, çавах! Урăххи Сенĕк Çеркушне кам качча пытăр! Хи-хи-хи! **(Укахвине çаннинчен туртать.)** Кул-ха, кул, Укахви инке, ма кулмастăн? Путиш вĕт!

УКАХВИ. Çамрăксем çинчен калаçма эпĕ ватă. Тата... сынран кулни аванах та мар. Хамăн та кин кĕртмелле, хĕр те качча памалла. Тем пулас-килес пур. Эпĕ, Крахъян, нумай тытăнса тăрасшăн мар-ха. Уйран çӳпçи парса ярайăн-ши?

КРАХЪЯН. Эх, эпĕ ун çинчен мансах кайнă! Атя, атя парса ярам. **(Иккĕшĕ те тухаççĕ. Крахъян кĕрет.)** Çав кирлĕ-ха, çав кирлĕ Сенĕксене! Ан тив, клеще ураллă арăмĕпе юнашар яла култар-

са пытăр-ха çав Сенĕк качаки. Мур илесшĕ, ман Маша çумне çулăхасшăн пулчĕ вĕт-ха. Каклиш сана! **(Урам еннелле, пӳрнисене каклиш туса, тăсса кăтартать. Çав вăхăтра чӳречерен шаккаççĕ.)**

УРАМРИ САСĂ. Крахъян аппа, çĕрулми кăларма каймалла. Халех!

КРАХЪЯН. Ой, çук, çук! Каккуй кунта çĕрулми кăларма, килте те аран-аран ахлаткаласа çӳретĕп. Пулмасть, пулмасть...

УРАМРИ САСĂ. Асту, Крахъян аппа, бригадирпа колхоз председателĕ калама хушрĕç мана.

КРАХЪЯН. Эсĕ, Кĕтерук, звеньевой тесе, çынсене хăратса ан çӳре. Атя, вĕçтер хăвăн çулупа.

УРАМРИ САСĂ. Эпир вĕçтерĕпĕр-ха. Анчах эсĕ, Крахъян аппа... Калăттăм та...

КРАХЪЯН. Ха, çаврасил! Вата сынна пĕр канăç та çук, пĕр канăç та! Пурте ĕрлешеççĕ. Тата Маша та Урине аппасем патĕнчен вăхăтра таврăнаймарĕ. Вăт, ăшхыптармăш! **(Алăкăн-тĕпелĕн уткаласа çӳрет, кĕçех урамра автомашина сасси илтĕнсе каять).** Ах, пĕтрĕ пуç. Леш, Кĕтерук, звеньевой, председателе элеклесе пама та ĕлкĕрчĕ пулас. Аса çапманскер! Колхоз председателĕ персе çитрĕ пуль... Кăтартăп-ха эпĕ вăл Кĕтерука, вĕрентĕп элеклесе çӳреме! **(Урам еннелле чышкипе юнать.)** У-у, сӳс чĕлхе! **(Çак вăхăтра пӳрте Машăпа Çеркуш кĕреççĕ. Крахъян, куçне-пуçне чарса пăрахса, пĕр самант юпа пек хытса тăрать.)**

КРАХЪЯН **(Çеркуш патнелле ыткăнса).** Путсĕр, авланнă хыççăн та хĕр пуçне çавăрса çӳретĕн-и-ха эсĕ? **(Машăна.)** Эсĕ тата, эсрел çури, çав ханттарпа мĕн явкаланса çӳретĕн? Нмăссăр! **(Машăна çапма тăрать.)**

МАША. Ма тĕркĕшен-ха, анне? Эпир Çеркушпа, ял Советĕнче çырăнса, иртнĕ кас туй турăмăр. Халь акă колхозăн çăмăл машинипе сана хăнана илсе кайма килтĕмĕр. Хăнасем пухăннă та ĕнтĕ.

ÇЕРКУШ **(кăмăллăн куларах).** Атя, тумлан, анне!

КРАХЪЯН **(пуçне икĕ аллипе çатăрласа тытать).** Турăçăм, мĕн пулса тухрĕ капла? Мĕн кăна паврамарăм-ши, ухмахскер? Ай, намăс, намăс! Аçта кайса кĕрес?

**Ч А Р Ш А В.**

# ШЫРАКАН – ТУПАТЬ

ПЬЕСĂРИ ÇЫНСЕМ:

**Петр Филиппович Архентов** — собес пайĕн заведующийĕ.

**Мария Михайловна Кашкина** — вата санитарка.

**Геннадий Федорович Ландышев** — халăх контроль комитечĕн председателĕ.

**Архентов кабинечĕ. Сĕтел тулли хут, тĕрлĕрен ручкăсемпе кăранташсем тултарнă курка евĕрлĕ кĕленче савăт, телефон, графин. Архентов журналти кроссворда шутласа ларать.**

АРХЕНТОВ (**мăччаналла тинкерсе**). Так, так... Çеçенхирти эрешмен. Сначăт, кил-çуртра пурăнаканни мар, çеçенхирти. Мĕнле чĕрчунччĕ-ха вăл, мур илесшĕ? (**Алăка шаккаççĕ.**) Кĕме юрамасть, тăхтăр кăштах. Çеçенхирти эрешмен... Пуçа çапса çурсан та тупаймастăп. (**Каллех алăка шаккаççĕ.**) Кĕме юрамасть! (**Кашкина алăк уçса пăхать.**)

КАШКИНА. Никамах та çук-çке.

АРХЕНТОВ. Каланă сире кĕме юрамасть тесе! Хуп алăка! А-а, эсĕ каллех сĕтĕрĕнсе çитрĕн-и-ха, тутăхса кайнă тимĕр пăрçа? Тимĕртен те хытăраххи. Кун пек хыткукарлансан, вуннă та килĕн-ха. Пĕлетпĕр эсĕ камне, перекет кассинче пин тенкĕ ытла укçа пур тесе мухтаннине те илтнĕ эпир. Перекет кассинче ун чухлĕ пур пулсан, килĕнте, арча тĕпĕнче, тата нумайрах ĕнтĕ. (**Майĕпен.**) Аллă-утмăл тенкине хĕрхенсе тăрать вĕт, ват супнă. (**Хыттăн.**) Кĕр эппин, алăка уçса ан тăр!

**Кашкина кĕрет.**

КАШКИНА. Ман тепре килес-ха, сывлăх сунатăп, Петĕр Филипчă. (**Ура çинчех тăрать.**)

АРХЕНТОВ. Мда... Итлетĕп. Мĕнле ыйтупа?

КАШКИНА. Ара, паянхипе пиллĕкмĕш килтĕм ĕнтĕ кунта, Петĕр Филипчă. Мĕн ыйтупа килнине хăвах лайăх пĕлетĕн.

АРХЕНТОВ. Ман пата кун каçиччен теçеткешер çын кĕрсе тухать, пурне те астуса юлма пуç библиотека мар. Хутсем памалли пулсан, тавай кунта. Нумай каласса ларма ман вăхăт çук, кашни минут хаклă.

КАШКИНА. Çаплине çапла пулĕ те-ха, хăв хушса янипе паян çĕнĕ хутсем илсе килтĕм. (**Сумкине уçса, хутсем кăларма пуçлать.**)

АРХЕНТОВ. Кунта Юхма пасарĕ мар, собес. Палканипе ĕç тăваймăн, хутусене тавай часрах.

КАШКИНА. Паччас паратăп. Пенси кăларма манăн халĕ пур хутсем те çитеççĕ. Профсоюз билетне икĕ уйăхшăн маркăсем çыпăçтарман, терĕн. Месткома кайса çыпăçтарттартăм.

АРХЕНТОВ (**тинкерсе пăхать**). Мда... Çыпăçтарнă тейĕпĕр. Малалла.

КАШКИНА. Акă кунта хĕрĕх пилĕк çул каялла ликпунктран вĕренсе тухни çинчен калакан справка. Ку та кирлĕ тенĕччĕ. Каччă кайнă хыççăн эп ăна алла тытса та пăхманччĕ, ĕнер арча тĕпĕнче аран-аран шыраса тупрăм.

АРХЕНТОВ. Телейӳ пур. Юрать-ха çухатман.

КАШКИНА. Акă, ку иртнĕ çул радикулитпа чирлени çинчен фельдшер панă справка. Кăçал вара ӳкмесĕр юлнă виçĕ шăлтан пĕри питĕ хытă ыратрĕ. (**Шăлне кăтартать.**) Ун пирки справка ыйтрăм та собесра кирлĕ тесе, çырса памарĕ, пит вашнах мар, терĕ фельдшер.

АРХЕНТОВ. Вашнă мар-тăк, черт с ним, тавай малалла.

КАШКИНА. Çиччас. Пенси илме стаж виçĕ кун çитмест терĕн те, Тептекассине кайса килмелле пулчĕ. Унта та эпĕ çулталăк ытларах санитаркăра ĕçленĕччĕ. Акă, ял Совечĕ панă справка. Халь ĕнтĕ манăн ĕç стажĕ çирĕмултă çултан иртет.

АРХЕНТОВ (**Кашкина панă хута тĕрлĕ май çавăркаласа пăхать**). Аха... Мда. Каланă документсене тупса килтĕн пулать. Юрать

тейĕпĕр... Мда... (**Хутне тата тиркерех пăхать. Савăннипе йăл! кулса ярать.**) Чим, стой, мĕн япала ку? Эсĕ хăш ялти медпунктра ĕçленĕ-ха?..

КАШКИНА. Ара, хучĕ çинче Тептекассинчи медпунктрах тесе çырнă-çке?

АРХЕНТОВ. Тоттă Тептекасси! Кунтарах кил-ха! (**Хутне Кашкинăна парать.**) Вула. Шур хут çине кăвак чернилпах çырнă: Мария Михайловна Кашкина гражданка Теппекассинчи медпунктра санитаркăра ĕçленĕ.

КАШКИНА. Ий-йя, ĕçленĕ çав, ĕçленĕ.

АРХЕНТОВ. Лайăхрах пăхса вула, Кашкина гражданка. Справкăра Тептекасси мар, Теппекасси тенĕ. Теппекасси, ăнланатăн-и?

КАШКИНА. Ара, вăл нимех те мар-çке. Хăвах пĕлетĕн, пирĕн районта пĕр Тептекассисĕр пуçне нимĕнле теппе-леппе тавраше те çук.

АРХЕНТОВ. Районта ун пекки пур-и, çук-и — вăл ман ĕç мар. Пире точно çырнă документ кирлĕ. Йăнăш çырнă хутсене йышăнса, хамăр çине ответлăх илме пултараймастпăр.

КАШКИНА. Ак тата тепĕр инкек, мур илесшĕ. Справкине çырса параканни урă çын пекех ларатчĕ-çке? Мĕнле астăваймарĕ пулать-ха. Петĕр Филипчă, хăвăрах Тептекасси тесе тӳрлетсе хумăрши? «П» саспаллирен «Т» саспалли туса хуни нимĕнех те мар ĕнтĕ, пичечĕ пур...

АРХЕНТОВ. Кашкина гражданка, эс кунта хурал пӳртне мар, собеса килнĕ. Собес мĕнле учреждение хăвах чухлатăн. Собес — районти чи пысăк, чи ответлă учреждени. Çавна ан ман. Эпир такой-сякой учрежденисем панă хутсене тӳрлетсе лармастпăр.

КАШКИНА. Уншăнах каллĕ-маллĕ çитмĕл çухрăма утса çӳрес килмест вĕт-ха ват шăмшакпа. Тӳрлетме ниепле те май килместшим?

АРХЕНТОВ. Тепĕр хут чăвашла калатăп сана: кунта эпир нимĕнле документ та тӳрлетсе лармастпăр. Илсе кай хутна Тептекассинчи тăмсайсем патне, куçпа пăхса тепĕр хут çырса паччăр.

КАШКИНА. Аçтан тупăнса пырать маншăн чĕр инкек. Паçăр, кунта кĕриччен маларах, пĕр ырă çынна хутсене кăтартрăм та: сана тахçанах пенси памалла пулнă, терĕ.

АРХЕНТОВ. Кашни çапкаланчăк сăмахĕпе ĕç туса лармастпăр эпир кунта. Аçтан тупăннă вăл сана саккунсăр пенси пама хушакан герой?

КАШКИНА. Çынни кунтах, собесрах ĕçлет пулмалла-ха. Те Хапташкин терĕ вăл, те Капташкин, лайăххăн илтеймерĕм.

АРХЕНТОВ (**çиллĕнсе**). Кирек кам пултăр, пенси парас ыйтăва татса параканни пока эпĕ. Нимĕнле Хапташкин та кунта кирлĕ мар.

КАШКИНА. Çапла пуль, çапла пуль. Анчах халь манăн мĕн тăвас-ха? (**Шутласа тăрать.**) Итле-ха, Петĕр Филипчă, кунта килес умĕн мана тепĕр çын урăхларах ăс пачĕ. Вăл вĕрентнĕ пек тусан мĕнле-ши?

АРХЕНТОВ. Ас пачĕ пулсан, йăтса çӳре эппин хутусене. Анчах пенси илес ыйтăва паян татса парасси çинчен ан та шутла. Ни-ни! Нимĕн те пулмасть.

КАШКИНА. Эпĕ... леш çын сăмахĕ пирки пуплетĕп-ха. Шултăрканă кустăрмана сĕрме канаш пачĕ те вăл....

АРХЕНТОВ (**çилленнĕ пек пулса.**) Мĕ-ĕн? Мĕн пуплетĕн çак эс? Кама, мĕншĕн сĕресшĕн?

КАШКИНА. Тип кашăк çăвара çурать тенине аса илтĕм мар-и.

АРХЕНТОВ. Да, пенсишĕн кастарса çӳрекен çынсем хушшинче путсĕррисем те пур-ха. Пĕрне çапла пенси тухмалла турăм та, хăй патне чей ĕçме илсе кайрĕ. Ирхине, киле таврăнсан, кĕсъене чиксе пăхатăп та, шуйттан çынни, аллă тенкĕ укçа чиксе янă.

КАШКИНА. Халь вăл чиперех пенси илсе пурăнать пуль?

АРХЕНТОВ. Ан тив, илсе тăтăрах. Пĕр айăпшăнах çынна пĕтерсе тăкас йăла çук пирĕн. Хăйĕн айăпне тӳрĕ кăмăлпа йышăннă хыççăн пĕррелĕхе каçартăмăр. Тепри тата пĕррехинче канвертпа çирĕм пилĕк тенкĕлĕххине сĕтел çинех хурса хăварнă. Эпĕ ун чухлĕ укçа тытса курман тесе шутланă пуль ĕнтĕ. Вĕрентĕп-ха эпĕ ăна çавăн пек мăшкăлланăшăн. Тепĕр çул ним мар утĕ-ха ман пата.

КАШКИНА. Петĕр Филипчă, вĕсем пирки шухăшласа пуççене ыраттарар мар-ха, иксĕмĕр пĕр чĕлхе тупса калаçма тăрăшар. **(Сумкинчен канверт кăларса сĕтел çине хурать.)** Çак канвертра мана урăх ниçта ямасăрах пенси кăлармалли кирлĕ хутсем пур. Вуласа тухăр-ха, Тептекасси те, Теппекасси те пĕтĕмпех çавăнта.

АРХЕНТОВ **(васкамасăр канверта уçса пăхать).** Юрĕ, Кашкина юлташ. Тăхта-ха, яту-шыву мĕнлеччĕ-ха сан? Да, да, аса илтĕм... Мария Михайловна. Алла кĕнĕ хутсене пирĕн пĕтĕмпех вуласа тухас пулать. Унсăрăн юрамасть. Шухăшлатăп-шухăшлатăп та, çынпа усал пулас килмест манăн. Сана та урăхран ахаль çӳретес мар. Çул май Тептекассине хам кĕрсе справкăри йăнăша тӳрлеттерсе тухăп. Çыншăн тăрăшса çӳренĕшĕн никамах та хурламĕ. Ĕç кĕнеки, паспорт сан тахçантанпах кунта выртаççĕ. Ак çак справкине хăвар та, пулчĕ. Ытти хутсене каялла илсе кай. **(Кашкина, хучĕсене пухса, сумкине чикет.)**

КАШКИНА **(мăкăртатса).** Паçăрах çак урапа çине лармалла пулнă иккен. **(Хыттăн.)** Урăх нимĕн те кирлĕ мар-и ĕнтĕ?

АРХЕНТОВ. Пурте пур, Мария Михайловна, урăх ниçта та ура ярса пусма кирлĕ мар. Халĕ кайма та пултаратăр, текех сире чăрмантарса тăмăпăр.

КАШКИНА. Халь пĕр-пĕрне пĕлетпĕр ĕнтĕ. Каям-ха эппин. Çав ăс вĕрентнĕ çынна ĕмĕр-ĕмĕр тав тăвăп. **(Тухса каять.)**

АРХЕНТОВ. Аран-аран ăс кĕчĕ ватă турчка аврине. Авсан та авăнасшăн мар. **(Канвертра 10-шар тенкĕлĕх укçасене кăларать. Шутласа пăхать — 10 укçа.)** Самаях аван авăнать иккен-ха хăй — çĕр тенкĕ чикнĕ. **(Укçине, канверт ăшне чиксе, сĕтел ещĕкне хурать.)** Лайăх карчăк пулчĕ ку, ничава! **(Аллисене сăтăркалать.)** Тата пĕр пин тенкĕ пухсан, «Жигули» туянмалăх пулать. Э, эсĕ, Мокей Иванч, хатĕрлев кантурĕнче ларнипе ан çатталан, пирĕн те çăмăл автомашина пулĕ, санăнни пек хăлтăр-халтăр «Москвич» çеç те мар. **(Телефон кăлтăрмачне çавăрнă май трубкине хăлхи патне тытать.)** Кам калаçать? Хапташкин-и? Кашкина Мария гражданкăн документчĕсене хатĕрле. Ман патăмра унăн пĕр справки пур, анчах вăл ку ĕçпе пит кирлех мар. Мĕн? Вон что! Памалла е памалла маррине кам лайăхрах пĕлет, эсĕ-и, эпĕ-и? Юрĕ, çитĕ, мĕн каланине пурнăçла. **(Телефон трубкине хурать.)** Асту, Хапташка, сан пекки хăй ĕçрен сирпĕннине сисмесĕр те юлма пултарать.

**Ландышев кĕрет. Архентов ун патнелле йăпăртатса ырать.**

АРХЕНТОВ. Килĕрех, килĕр, Геннадий Федорович. Пирĕн пек авторитетсăр собеса килсе курма ăçтан аса илтĕр? **(Ландышев аллине чăмăртать.)** Сывлăхăр мĕнле, мăшăрăр епле пурăнать? Ачăрсем епле чупаççĕ?

ЛАНДЫШЕВ. Сывлăх сунатăп, Петр Филиппович. (**Пукан çине ларать.**) Сирĕн пата пысăк ыйтупа килме тӳр килчĕ. Май пулсан пулăшăр-ха. Кĕтмен çĕртен облăçри комитетран телеграмма çитрĕ, çак минутрах канашлăва тухса каймалла. Çын ĕненмелле мар, çумра пĕр пус укçа та юлман. Çавăнпа тӳрех сирĕн пата кивçене тухса утрăм. Эсир нихăçан та укçасăр ларакан марччĕ.

АРХЕНТОВ. Укçи вăл манăн çукрах-ха. Çывăх юлташшăн тупас пулать ĕнтĕ. Пĕр вăтăр тенкĕ тупса пама пулать. Çитет-и?

ЛАНДЫШЕВ. Хулана кайнă чух укçа ытларах илни пăсмасть те-ха вăл. Мĕн чухлĕ пур, çавна парăр-ха эппин?

АРХЕНТОВ. Тархасшăн, илĕр вăтăр тенкипех. Халлĕхе хама пит кирлех мар. (**Сĕтелĕнчен виçĕ вуншарлăххи кăларса парать.**)

ЛАНДЫШЕВ. Тавах, Петр Филиппович. Малтанлăха виçĕ укçи те çитĕ-ха. (**Блокнотне кăларса пăхать.**) Так-так... Серийĕ те, номерĕ те килет. Тепĕрне пăхăпăр. Аха, ку та ларать. Виççĕмĕшĕ те... Ытти çичĕ укçине те кăларăр-ха эппин, гражданин Архентов!

АРХЕНТОВ. Мĕскер? Мĕнле çичĕ укçа?

ЛАНДЫШЕВ. Сĕтел ещĕкне хунă вунă тенкĕлĕх çичĕ укçана ыйтатăп эпĕ сиртен, гражданин Архентов. Тин çеç Мария Михайловна Кашкина тыттарса хăварнисене.

АРХЕНТОВ (**вĕткеленсе**). Провокаци ку, провокаци! Кашкина мана нимĕнле укçа та паман. Эпĕ нимĕн те пĕлместĕп!

ЛАНДЫШЕВ. Архентов гражданин, мĕншĕн пит вĕриленмелле, ма кăшкăрашмалла? Лăпланăр. Пенси илме тивĕçлĕ ватă санитаркăна эсир хăвăр пата юри пилĕк хут килтернĕ. Пĕлетĕр-и, вăтăр пилĕк çухрăмри ялтан! Юлашкинчен, намăса пĕлмесĕр, çав вата хĕрарăмран çĕр тенкĕ взятка илсе юлнă.

АРХЕНТОВ. Пĕр пус та илмен эпĕ унран, суять вăл, пĕтме маннăскер! Ку укçана перекет кассине хума килтен илсе килтĕм.

ЛАНДЫШЕВ. Кунтарах килĕр-ха. Ман блокнот çине лайăххрах пăхăр. (**Архентов кукăркаланса пырать.**) Эсир мана панă укçасен номерĕсем — ак çаксем. Куçем — акă — сирĕн сĕтелрисем.

АРХЕНТОВ (**хыпăнса ӳксе**). Ман укça номерĕсене эсир ăçтан пĕлетĕр?

ЛАНДЫШЕВ. Сирĕн мар вăл. Архентов. Кунта киличчен вăл пирĕн комитета кĕрсе тухрĕ. Эпир унпа прокурор патне кайрăмăр. Унта вара вата санитарка сире пама илсе килнĕ укçасен номерĕсене çырса юлтăмăр.

АРХЕНТОВ. Аа-а, эсир мана улталаса шутпа юри ятарласа янă иккен вăл карчăка! Уншăн эп сире ответ тыттаратăп!

ЛАНДЫШЕВ (**телефонпа шăнкăравлать**). Андрей Петрович, Ландышев калаçать. Кашкина гражданкăн укçи пĕтĕмпех кунта. Виççĕшĕ — ман алăра, çиччĕшĕ — Архентов сĕтелĕнче-ха. Номерĕсем пурте çавсемех. (**Архентова.**) Трубкăна тытăр, сирĕнпе прокурор калаçасшăн.

АРХЕНТОВ (**мĕскĕн сасăпа**). Итлетĕп, Андрей Петрович, итлетĕп. (**Пĕр хушă чĕнмест.**) Э... э... вăл укçана эпĕ хамах сирĕн пата илсе пырасшăнччĕ те, пыраймарăм. Ландышев юлташ килсе чăрмантарчĕ. (**Каллех пĕр хушă чĕнмесĕр тăрать.**) Çук, апла мар, Андрей Петрович. Юрĕ. Ниçта та каймăп. Кунтах. (**Пукан çине ахлатса ларать.**) Ох, шуйттан илсе килчĕ пуль паян ман пата çав карчăка. (**Сетелти укçисене кăларса перет.**) Мейĕр, илĕр, тасалăр! Кам шутланă-ха кун пек пулса тухасса? Прокурор мана арестлесси çинчен пĕлтерчĕ. Пĕтрĕ пуç! (**Пуçне аллисемпе ярса илет.**)

ЛАНДЫШЕВ. Кам мĕн шырать — çавна тупать.

**Ч А Р Ш А В.**



# Анатолий ЮМАН

Анатолий Юман... Чӑн-чӑн хушамачӗ унӑн — Ермилов. Эппин, ӑҫтан тупнӑ-ха вӑл тепӗр хушамат? Мӗнле майпа Юман пулса тӑнӑ?

Кун пирки ҫыравҫӑ ҫапла шӳтлет: ӗлӗк-авал чӑвашсем, ачи-пӑчине тӗрлӗрен пӑтӑрмахсенчен упрас тесе, чӑн-чӑн ятпа пӗрле тепрер ҫирӗп е ҫунатлӑ ят панӑ пулать: Юман, Тимӗр, Чӗкеҫ, Курак т. ыт. те. Ун аслашшӗне те, ҫавна шута хурса, хӑйӗн чӑн-чӑн ячӗ ҫумне Юман текен тепӗр ҫирӗп ят хушса панӑ-мӗн. Ҫав ҫирӗплӗхе малалла тытса пырас тӗллевпе Анатолий Ермилов вара Юманланса халӑха тухма ҫирӗп «решени» йышӑннӑ. Ку ӗҫ Ульяновск облаҫӗнчи Чӑвашкасси ятлӑ чӑваш ялӗнче 1932-мӗш ҫулта пулса иртнӗ. Унтанпа сахал мар юхнӑ Чӑнлӑ шывӗ. Вӑл сӗткен панипе Юман та ҫӳлеллех кармашнӑ. Ӳсме пултарнӑ таран ҫӗкленнӗ те пурнӑҫри тӗрлӗрен йӑх-яха ҫатракаллӑ юман милӗкпе хӗртме тытӑннӑ. Хӗртет те хӗртет халь вӑл ӑстиҫуксене — ывӑнма та пӗлмест. Милӗкӗ туратлӑрах та вӗрирех пултӑрччӗ ҫеҫ!

# ЫРАТМАН ПУÇА — ТИМĔР ТУКМАК

Çуллахи ир. Хĕвел тухайнă çеç-ха. Ашă çумăр çуса кайнă хыççăн çутçанталăк чĕрĕ вăй илнĕ, мĕнпур йывăç-курăк пуçне каçăртнă. Инкек-синкек çинчен нимĕн те аса илтермест.

Çавнашкал кунсенче пĕринче эпĕ урампа иртсе пыраттăм. Сасартăк умра çари! çухăрнă сасă илтĕнчĕ. Пуça çĕклесе пăхрăм та, хам паталла çил пек ыткăнса килекен хĕрарăма курах кайрăм. Аялти кĕпе вĕççĕнех хăй. Ку Аптрашки Йăван арăмĕ Явраç инке пулах кайрĕ. Унран пĕр çирĕм метр хыçалта кил хуçийĕ — Аптрашки Йăванĕ — ыткăнать. Чăн-чăн спринтер пек илтерет. Урисем çĕре те тивмеççĕ тейĕн.

Авалхи Олимп вăййисенче пĕр кĕтÿçĕ куяна та хăваласа çитнĕ, тет. Паянхи чĕлхепе каласан, 100 метрлă хушша вăл 7,2 секкунтра чупса тухнă имĕш. Ку чухнехи чемпионсем аякра тăччăр! Аптрашка шăп та шай çавнашкал хăвăртлăхпа ыткăнса пынăнах туйăнчĕ мана.

Малтанах эпĕ, вĕсем мăшăрĕпе пĕрле ирхи зарядкăна тухнă пуль, терĕм. Анчах ку апла марри часах палăрчĕ. «Олимп чемпионĕ» чупнă май арăмне хăрта-хăрта илет. «Вĕлеретĕп!» — тесе кăшкăрать. Калăн, ун умĕнче çирĕм çул пĕрле пурăннă мăшăрĕ мар, ĕмĕр хур кăтартса тинкине кăларнă тăшманĕ пырать. Эпĕ вара ĕнер Аптрашкапа мăшăрĕ кÿршĕ яла Аптраманкассине хăнана кайнине аса илтĕм.

Куçĕсем урса кайнă вăкăрăнни пек юнпа тулнă Аптрашканăн. Тен, çав курайманлăх вăй парса пырать пуль ăна чемпион пек хăвăрт чупма? Тин çеç çуса иртнĕ çумăр хыççăнхи нÿрлĕ тăпра çийĕн нуски вĕççĕнех илтерсе пырать.

Паллах, «чемпион» хăй мăшăрне çийĕнчех хăваласа çитрĕ. Тигр пек таткаласа çурса ывăтма хатĕр вăл ăна.

— Аха-а! — тет, хăрăлтатса. — Çитеймест терĕн пуль! Манран эс мар, куян та тарса хăтăлаймасть!

— Мĕн турăм эп сана, шуйттан! — кăшкăрать арăмĕ. — Мĕншĕн хĕнен? Çинçе мăй! Такана хырăм!

— Парăп эп сана «такана хырăм!» — силлет арăмне Аптрашки. — Тавтапуç кала, ыр çын тĕлне пултăн! (Ку вăл ман пирки ĕнтĕ). Атту халех вĕлереттĕм. Тĕнче ухмаххи!

Явраç инке пурпĕрех аптăрамарĕ-ха. Сасартăк ман еннелле хаяррăн çаврăнчĕ те:

— Вăл хăй те арăмĕшĕн — шуйттан! — тесе хучĕ.

Кирек кам упăшки те «шуйттан» тени пулчĕ ĕнтĕ ку. Манăн ыратман пуça тимĕр тукмак пекех пырса тиврĕ çак сăмах.

Нумай пурăнатпăр-и, сахал-и — эпĕ пулса иртни çинчен манса кайма та ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ — мана районти халăх судне кайма хут пырса тыттарчĕç. Аптрашки Йăванĕн арăмĕ упăшки пирки ĕç пуçарнă иккен. Мана свидетеле тăратрĕç. Ирĕксĕрех хам курниилтнине каласа пама тиврĕ вара. Анчах та судра Явраç инкене паллама та май килмерĕ. Вăл хăй евитленĕ хыççăнах упăшкипе килĕшме ĕлкĕрнĕ-мĕн те, халĕ йăлтах кутăна печĕ. Унăн мăшăрĕ ăна «пÿрнепе те тĕкĕнмен» иккен, вĕсем «шăкăлтатса» çеç пурăнаççĕ. Ку

кăна та мар, вăл ăна чыслать, хисеплет имĕш. Этем пуçĕ шутласа кăларма май çук хайхи танлаштарусене вара йăлтах мана, свидетеле, тавăрса пачĕ.

Çапла тимĕр тукмак нимсĕр-мĕнсĕрех мана лекрĕ.

# УЛАХ САЛАНЧĔ

Сидор Иванович Закускин улах ларма юратакан пуçлăхчĕ. Улах йĕркине те вăл хăех уставласа çирĕплетнĕччĕ. Сахал марччĕ унта «пунктсем». Чи малтанхи вăл — шанчăклă сăлтав тупса килтен вĕçерĕнесси. «Вăл-ку» текенни çук чух—кĕсъере пĕр тенкĕрен кая мар укçа тытасси. Ытти пункчĕсем те хăйне евĕрлĕччĕ кунта. Çыртмалли илсе укçана сая ямалла мар, эрех валли перекетлемелле. Сухан пуçĕ, çăкăр татăкĕ чиксе тухсан та çитет. Пулă хӳри пулсан, тата лайăхрах. Ытлашши çисе тултарни сывлăхшăн сиенлĕ, çавна манмалла мар. Ĕçессе вара какăричченех ĕçме юрать, анчах харпăр хăй урипех киле çитмелле. Тепĕр кунне мухмăр-сухмăрпа аптраса сӳтĕлмелле мар, ĕçме пĕлтĕн-тĕк — ĕçлеме те пултар, ял халăхне ан култар. Пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл çеç калаç, ĕçре те сĕтел хушшинчи пек шитă-крытă пултăр...

Хĕрсе кайсан, калаçăвĕ пирĕн шайрах тытăнса тухаймастчĕ çав. Хăш чух хамăр урасене хамăр шыраса тупайманни те пулкалатчĕ...

Çак йĕрке пурсăмăра та килĕше пуçланăччĕ ĕнтĕ. «Вăт, Çитăр Йăванччă, пуçлăх-тăк пуçлăх! — теттĕмĕр хамăр хушăра. — Чăнчăн çын. Рядовойсемпе епле пĕр çăвартан пурăнать вăл. Тиркемест».

Унччен те пулмарĕ, пирĕн çинчен ырă мар сăмах-юмах çӳре пуçларĕ, ĕçре те пăтăрмахсем палăрчĕç: прогулсем йышланчĕç, «чирлеме» тытăнтăмăр — ал-урасем «уставра» хушнине ниепле те пăхăнасшăн мар, ĕç патне çыпçăнмаççĕ. Куç хыçĕнче пуçлăхран тăрăхласа хывнă такмак та явăнса çӳреме тытăнчĕ:

Çитăр Йăванч — çилхăван.  
Черкке тĕпне — куç хыван.  
Çи те тăр, ĕçле, йăван, —  
Эрехпе эс пĕр тăван.

Арăм вара... эх, кайрĕ ахăрса! «Енчен те, улаха çӳреме пăрахмастăн-тăк, ял Советне кайса евитлетĕп, ĕçлеттерсе тӳрлеттермелли пульницана ăсаттаратăп», — тет. Хушăран хушă куççульне те пăчăртаса кăларать: «Хăв пуçна шеллемесен, ачу-пăчуна шелле хуть, вĕсене тăлăха хăварас тетĕн-им?» — тет. Тĕрлĕ енчен пуça хырать. Чăн-чăн хыркăч.

— Вçо! Тек ĕçместĕп! Пĕр тумлам та... Картса хур! — сăмах патăм пĕринче арăма.

Çав татăклă утăма тунă кун ĕçе ним пулман пекех çитрĕм вара. Ĕç кунĕ шăв-шавсăрах иртрĕ темелле. Киле кайма пуçтарăннăччĕ çеç, ман ума Хветут тусăм пырса та тăчĕ.

— «Хурана» пĕр тенкĕ кăларса хур, — шĕлепкине ман еннелле тăсрĕ вăл.

— Эпĕ мĕн... касса татрăм çав, — терĕм çак самантра пухăнса тăма ĕлкĕрнĕ юлташсене.

Çапла калани вĕсене килĕшрĕ пулас, ахăлтатсах кулса ячĕç.

— Ну, шӳт тума пултаратăн та вара! Артиса каймалла сан. Шут шăрçисем шаккаса ларса ахалех çĕрсе пурăнатăн, — терĕç.

Эпĕ чăнах та шӳтлеменнине туйсан, пӳлĕмре шăп пулса тăчĕ: чисти Гоголь «Ревизорĕнчи» пĕр паха шăплăх пекех.

— Апла иккен... Пĕлменччĕ, — пысăк пĕлтерĕшлĕн каласа хучĕ Хветут.

— Ха-ха-ха!.. Ыран хĕвел чӳлмекрен е кăмакаран тухать, курăр акă... — хушса хучĕ Михал та.

Пĕр кун иртрĕ çапла, иккĕ... Эрне... Уйăх... Хĕвел чӳлмекрен те, кăмакаран та тухмарĕ.

Çĕнĕрен çуралнă пек пулса кайрăм вара. Ирхине тăратăп та — пуç тăп-тăрă, ыратмасть. Ĕненес те килмест. Унтан... физкультурăпа туслашрăм: ирех тăратăп та зарядка тăватăп. Унччен вунăвунпилĕк утăм чупсанах хашкана ерекенскер, халĕ пилĕк çухрăм чупса çаврăнсан та хăнк та çук. Анчах хамăрăн пуçлăха, Çитăр Йăванчча асăрхатăп та шел пек туйăнса каять. Ара, çуллен путевка илет те кăнтăр енне вĕçтерет. Апла пулин те, пĕрмай чĕрепе хĕн курать. Пĕррехинче çакăн çинчен хăйне шахвăртса каларăм та, йывăра илчĕ, çилленсех кайрĕ.

— Мĕн аташса çӳретĕн кунта? Ман — гипертони кăна! — терĕ.

Юлашки сăмахне парне илнĕ пек мăнкăмăлланса каласа хучĕ.

Ĕçри ытти «туссем» те ютшăна пуçларĕç манран. Кулма, шӳтлеме те пăрахрĕç.

Ку çеç-и! Ура хума хăтланакансем те тупăнчĕç. Преми таврашне картма, тĕрлĕрен элек сарма тытăнчĕç, «килĕнче вăрттăн ĕçет», текелеме те пăхрĕç. Уйрăмах профсоюз пухăвĕнче хăйсене критикленĕ хыççăн урса кайрĕç. Вĕсен шучĕпе, чипер куç-пуçлă çын эрех ĕçмесĕр пурăнаймасть имĕш.

Çапах та «Закускин улахĕсем» вăрахах тăсăлаймарĕç. Ку вăл çапла пулса тухрĕ:

Пĕррехинче Закускинпа унăн тусĕсем хăйсен черетлĕ улахне пухăнса юлчĕç. Анчах ăна сăлтавласси çăмăлах пулмарĕ.

— Чим-ха, паян мĕн ятпа пухăнатпăр? — ыйтрĕ Хветут юлташĕсенчен. — Çуралнă кунсене кашниннех палăртса пĕтернĕ. Манăн раштавра тин çитет...

— Камсен те пулсан «çĕнĕ кайăк» хушăнман-и? Унăн тяппине «çума» ансатчĕ...

— Ун пекки те илтĕнмест.

— Ача çуратас пирки ман арăм яхăна та ямасть. «Сан пек пьяницăпа пĕрне пăхса ӳстересси те тамăк, тет, — тӳрре тухма пăхрĕ тĕп бухгалтерăн виççĕмĕш заместителĕ Аркаш.

Учреждение тин çеç ĕçе кĕнĕ çĕнĕ, вунвиççĕмĕш шофер, Алюш, ĕççĕр аптăранипе тахçантанпах кроссворд шутласа лараканскер, сасартăк пуçне çĕклерĕ те:

— Пилĕк саспаллирен тăракан пулă... — терĕ лăпкăн.

— Çуйăн, — хуравларĕç ăна пĕри те тепри.

— Тупата çавă! Епле çакна та маларах тавçăрман? Хамăр ĕнер çеç тытса килнĕччĕ мар-и?!. — тĕлĕнчĕ шофер.

— Çуйăн тенĕрен, аствсе пăхсан пăсас çукчĕ....

— Мĕнех вара, сăйлама пултаратăп. Манăн паян çуралнă кун,— терĕ Алюш, сĕтел хушшинчен мăнаçланса тухса.

— Епле апла? Иртнĕ эрнере çеç сан çуралнă кунна палăртманччĕ-и?

— Вăл хут çинче çапла. Официальнă. Атте хут çине тĕрĕс мар çыртарнă. Чăннипе эпĕ шăп та шай паян çуралнă.

— Ара, мĕн халиччен шарламасăр ларатăн тата?! — хаваслансах кайрĕ Закускин.

Малалла ĕç-пуç мĕнле аталанса пынине эпĕ курман. Анчах тепĕр кунне çакă пурне те паллă пулчĕ.

Умри юлташĕсене паллами пуличчен ĕçсе лартнă «юбиляр», эртелти йăла-йĕркесене пĕлсех пĕтерейменскер, сасартăк тискер кайăк пек кăтăрса кайнă. Ăна йăпатма, ăсатма хăтланса пăхнă — яхăна та яман çакскер. Пĕрин çумне çулăхнă, унтан — теприн çумне. Юлашкинчен Закускин патне те черет çитнĕ. Хăй çамрăкрах чух боксер пулнине аса илсе, ун çине чышкăпах сиксе ӳкнĕ. Закускинĕ хăй те ĕлĕк-авал спортсмен пулнă иккен — акатуйĕнче кире пуканĕ çĕклес енĕпе ирттерекен ăмăртусене те хутшăннă. Çавăнпа вăл Алюш чышкисенчен хăраса ӳкмен. Ăна пĕрре сулсах ӳпĕнтерсе янă. Лешĕ парăнма шутламан, сиксе тăрса, пушă кĕленчесемпе вăркăнтара пуçланă...

Пĕр сăмахпа каласан, юлашкинчен, айккинче ларакан «арбитрсен» милиципе пĕрлех васкавлă пулăшăва та шăнкăравлама тивнĕ.

Халĕ, саккунсем çирĕпленнĕ хыççăн, ĕç-пуç йăлтах урăх çулпа кайрĕ. Черкке çинчен шутласси асра та çук. Пушă вăхăт тупăнсанах, Михал сунара çӳрет, Хветутпа Аркаш — пулла. Хобби теç-çĕ-и-ха? Саланчĕ улах.

# К У Ç Л Ă Х

Пĕррехинче ĕнесем суса ывăннă хыççăн, канма тесе, выльăх пăхакансем пурăнакан çурталла утнă чух, Крахъян аппа партком секретарьне Илле Энтипне тĕл пулчĕ.

— Сывлăх сунатăп, Агриппина Ивановна! — терĕ лешĕ, ăна асăрхасан. — Манăн ыйту пур. Манăн мар-ха, парткомăн тес пулать. Ыран район центрĕнче малта пыракансен канашлăвĕ пулать. Çавăнта сăмах тухса каламалла сан.

— Мĕн тăвататăр эсир манпа, ватăпа? Ав, çамрăксем калаçчăр, — хирĕçлерĕ Крахъян. — Çитменнине эпĕ çын умне тухса калаçса та курман. Чĕлхем пуклак.

— Ничево! Мĕн каламалли пирки ан пăшăрхан. Сăмахне ăна сырса та хатĕрлерĕм ĕнтĕ, — хăйĕннех печĕ партсекретарь. — Тухса вуласа пар та — ĕçĕ пĕтнĕ!

— Вуласси пулмасть пуль. Куçсем те витĕрех мар, хут пĕлни те çавăн чухлĕ çеç. Çырнă-çырнах, хăвăрах вуласа парăр.

— Апла мар, Агриппина Ивановна. Эпир ахаль те ялан калаçатпăр. Çынсем сан сăмахна итлесшĕн. Эсĕ пирĕн чаплă доярка-çке?

Юлашкинчен ҫавах килӗшме тиврӗ Крахъян аппан. Пӑлхануллӑн илчӗ вӑл Илле Энтипӗ тӑрӑшса ҫырса хатӗрленӗ хут таткине.

— Халӗ районти малта пыракан дояркӑна, Агриппина Ивановна Савкинӑна, сӑмах паратпӑр, — терӗ канашлӑва ертсе пыраканӗ.

Крахъян аппа халӑх умне тухнӑ чух калама ҫук пӑлханса кайрӗ: урисем те утайми пулчӗҫ унӑн, сасси те ҫӗтрӗ. Трибуна патне ҫитиччен вӑхӑт питех те вӑраххӑн шунӑн туйӑнчӗ.

Акӑ, вӑл утса ҫитрӗ те залри халӑха пӑхса ҫаврӑнчӗ. Чӗтрекен аллисемпе хут таткине умне кӑларса хучӗ. Унтан ҫав алӑсемех кӗсъе патне туртӑнчӗҫ, куҫлӑх шырарӗ унта... Анчах та — ак инкек! — ширанӑ япала унта тупӑнмарӗ. Ёнтӗ Крахъян аппа ҫухалсах кайрӗ.

— Юлташсем! — терӗ вӑл чӗтревлӗ сасӑпа.

Малалла килӗнче пӑхмасӑр вӗренме ёлкӗрнӗ пӗр-икӗ пуплеве калама пуҫларӗ:

— Партипе правительство йышӑннӑ решенисемпе хавхаланса, пирӗн «Хум» колхоз колхозникӗсем пысӑк обязательствӑсем йышӑнчӗҫ. Ҫав обязательствӑсене тепӗр хут пӑхса тухса...

Тек аса илесси пулмарӗ. Аллинчи тӗтреллӗн курӑнакан саспаллисене тимлесе тинкернипе куҫӗсем шывлансах ҫитрӗҫ унӑн. Оратор ҫухалса кайнине залра ларакансем те часах туйса илчӗҫ. Вӗсем ӑна питех те шеллесе пӑрахрӗҫ.

— Ху пек кала! — хавхалантарчӗ тахӑшӗ.

Ҫак асамлӑ сӑмахсем ӑна, шыва путакана ҫӑлӑнӑҫ ҫаврашки ывӑтса панӑ пекех туйӑнчӗ: вӑл «хӑйле» калаҫа пуҫларӗ, хӑй пӗлнине, хӑй курнине, хӑй тӳснине ӳкерчӗклеме тытӑнчӗ. Ёҫри ҫитменлӗхсемшӗн айӑплисене те хытӑ лекрӗ вара, ҫав шутрах Илле Энтипӗ те пайсӑр юлмарӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Илле Энтипӗн те ӗҫӗ кӑштах ҫӑмӑлланчӗ — вӑл пуху умӗн ҫынсемшӗн «сӑмах» ҫырма пӑрахрӗ.

❋

## Милӗк

**Эс камне ыйтса тӑмаҫҫӗ**
**Нихӑҫан та мунчара.**
**— Милӗк пур-и! — аптратаҫҫӗ.**
**Милӗк — чи кирли, ара.**

**Милӗксӗр мунча — мунча-и!**
**Вӗри шыв кияте те пур.**
**Тухтӑртан ыйтсан та калӗ —**
**Йӑлт тухать шалти мир-мур.**

**Ҫавӑнпа хуть эс министр,**
**Хуть ахаль кӗтӳҫ кӑна —**
**Милӗкпе пит хыттӑн сӑтӑр**
**Кирӗклӗ ҫан-ҫурӑмна.**

Милĕкĕ пулсассăн пултăр
Хурăнран е юманран.
Вăрманти пек кĕрсе тăтăр
Ун шăрши те сăмсаран.

Милĕкне касса çыхмашкăн
Авалтан ăста чăваш.
Килчĕ милĕкли те акă,
Çапăнмасть-ха хăй вăш-ваш.

«Хăй хакне» пĕлет вăл пайăх,—
Мăшăр милĕкĕн хакне.
Хатĕрленĕ килнĕ майăн
Алсишне те çĕлĕкне.

Çапăнсан вĕри ан тивтĕр
Чĕркуççи пек çут пуçне.
Пĕçермешкĕн шыв та хатĕр
Акăш-макăш милĕкне.

Кĕлте пек ĕнтĕ пит селĕм!
Пит сулмаклă та çемçе.
Кĕтесси, — тееççĕ, — вилĕм,—
Кĕтрĕ çарамас тĕнче.

Çапăнма ун çук-и вăйĕ!
Сив шыв лартрĕ те умне,
Эхлетсех ислетрĕ хăйĕн
Хир пек анлă çурăмне.

Çур сехет те пуль çунтарчĕ
Килнĕ çын. Лапка — вĕри.
Пур такмакĕ те. Култарчĕ.
Вăй парса тăрать юрри.

Кăмăлне тинех тултарчĕ.
Анчĕ. Тухрĕ. Вăт Кĕлпук !
Сив шывпа кĕç чаш! тутарчĕ —
Шăнасси асра та çук.

— Пар-ха эп, екким раманччă!
— Кўр-ха, манăн çурăма...
— Черете тăрсан аванччĕ...
— Чăн та, унсăр юрамасть.

Çĕнĕрен хĕрсе ташларĕ
Çĕнĕ милĕк çăт та çат!
Ак, пĕрне вăл ăшаларĕ,—
Тепĕрин çине куçать.

Халь ялта та коммуналлă
Мунчара реххетленен.
Çарамас пулсан та паллă,
Кашнине ятран пĕлен.

Бригадир чунне кантарчĕ,
Председатель черетре.
Пĕри ВООП членĕ пулчĕ,
Вăл ларать çӳлти ретре.

Икĕ хут та кĕрсе тухрĕ...
Кам ку тейĕр! Контролер.
Кирлĕ чухлĕ ӳчĕ хухрĕ,—
Ĕнтĕ халь эрне юп кур.

Пур профкомăн секретарĕ,
Пур дружинник, адвокат...
Милĕк мĕн! Ахаль выртмарĕ,
Тек ĕçлерĕ çăт та çат!

Вăл пĕрерĕн тĕрĕслерĕ
Хыт аяк пĕрчисене.
Аслине те тиркемерĕ,
Ма тиркес кĕçĕннине!

Çапнă май такмак сӳтмешкĕн
Пĕринчен тепри ăста.
Ырлăх та мунча кĕмешкĕн —
Акă вăл çăтмах ăçта!

Кăмăллă кашни. Мухтаççĕ
Акăш-макăш милĕке.
Хăйпăтать вăл — тавлашас-и! —
Тир-сăран пек кирĕке.

Килнĕ çын кĕç лакăштатрĕ
Йăтрĕ те хăй милĕкне.
Мунча халăхĕ ăсатрĕ
Тав тусах ăна килне.

Шел, пĕри те чухлаймарĕ
Кап! тытма чее вăрра:
Чаплă милĕк ӳснĕ мар-и...
Ялти аслă урамра.

## Ик ураллă упа

Таврана йыхрав янрарĕ:
— Çумăра çанталăк кайрĕ —
Тырпула çăлмашкăн кар
Çавапа хире тухар!

Кур: çĕкленчĕ ĕçлĕ халăх,
Хирĕçет çанталăк кăлăх —
Пусăра, хирте аван
Ĕç ăнса пырать паян.

Çак хĕрӳ ĕç тĕлĕнче
Пĕр Иван çеç килĕнче.
Ма вăл юлнă-ха йышран!
Чир-амакĕ йышлăран.
Унран чирлĕрех этем
Тĕнчере те çук-и, тен.
Грипп, бронхит, çăпан, ангина.
Сахăр чирĕ, скарлатина,
Гепатит, радикулит,
Дизентери, тонзилит,
Астмăпа гипертони —
Иван чирĕсем тени.
Аптăрать-мĕн вăл ăшпа,
Чĕрепе те пĕверпе...
Ĕçлес чух хирте йышпа
Вăл туслашнă чир-чĕрпе.
Çавăн чухлĕ чирпеле
Тахçанах çын пĕтмелле.

Хăнт та çук çӳрет Иван,
Ун апат анать аван.

Вăхăт шурĕ малалла:
Çĕрулми кăлармалла.
Кĕреçе тытать патвар
Килĕнче Иван вăр-вар.
Пирĕн ĕнерхи лӳппер,
Упа пек хирет çĕре.
Ак сана пӳре-пĕвер,
Ак сана хайхи чĕре!
Аптрамасть Иван, тӳсет
Вăтăр соттăх çĕр çинче.
— Ак ăçта упа! — тесе
Тĕлĕнет унран тĕнче:

## Мерттелле

Пур пирте — «Шараш-кантур»,
Пур директор, штат та пур.

Шăкăр! шалу илнĕ чух —
Пĕр йĕрке те пушши çук.

Ĕçре кирлĕ йыш, эртел—
Пуш-пушах умри сĕтел.

Шарламасть станок цехра,—
Кантур калăн ыйăхра.

Тарье инке лавккара,
Марье тата аякра:

Ыйтса кайнă пуçлăхран —
Килмелле ик талăкран.

Ăçта кайнă! Мĕн тума!
Ку кирлех-и! Вăл — кума.

Ваççа кайнă хăнана,—
Унта çÿрĕ пĕр кана.

Хĕрне панă. Туй — шÿт мар,
Сахалтан та эрне пар.

Килеймерĕ тем Сахрун,
Ун ĕнер — çуралнă кун.

Митрахванăн çук сăлтав,
Хăй çаплах килмен-ха, ав.

Мухмăр ятлă чирпеле
Вăл чирлет эрнипеле.

Те çав лекнĕ! Кам пĕлет!
Вунпĕр иртсен, тен, килет!

Йăкăнат! Туртать пирус,
Ун пирки пуçна ан ус.

Ĕçе килнĕ вăхăтра,—
Тухнă çакă самантра.

Йĕрке çук ĕçре пĕртте!
Кам директорĕ! Мертте.

Ма чармасть! Çитмест хевти.
Хăй те çылăхлă, тет-и...

Йĕрке çук иккен йышра —
Мерттене эс тыт асра.

Шăлса ывăт шăпăрпа —
Ан пул ăпăр-тапăрпа.

Ĕç ан пытăр Мерттелле,—
Витĕм кирлĕ эртеле!

## Коллекционер

Кĕнеке пухма сатур
Кÿршĕри ханттар Якур.

Платонран Толстой таран —
Шкап чăтса ларать аран.

Вуласса хӑй вуламан,
Илнӗ — тек тытса курман.

Хуплашки, ара, чипер,
Чи пахи-мӗн — интерьер.

«Алӑран тупать» Якур.
Кам алли! Тен, кукӑр, мур!

Чаплӑ хуплашки ҫинче
Пур пичет те — эй, тӗнче!..

Кӗнеке керменӗн-ҫке
Ҫакӑ хаклӑ кӗнеке.

Керменрен пӗҫертнӗскер.
Факт! Халь калӑн эс мӗскер!

Хӑнт! та ҫук ҫаплах Якур,
Факт ҫине,— тет,— сур та хур!

Эпӗ илнӗ укҫалла,
Халь парас-и каялла!!.

Конан-Дойль камӑн пур!
То-тӑ!.. — мухтанать Якур.

Якур — коллекционер...
Кил-ха, милиционер!!.

## Сӗреке

**(Шӳт)**

Кӳлӗре тытаҫҫӗ пулӑ
Такамсем яра кунах.
Кӳлли анлӑ, шывӗ тулӑх,
Ҫыранта кӑвайт ҫунать.

Ҫуйӑн та ҫӑрттан, уланкӑ —
Пурте пур кунта ай-ай!
Ҫӑтӑл-ҫатӑл турӗҫ акӑ,
Сӗтӗрсе кӑларнӑ май.

Мӗскӗн пулӑ, хӑтӑлаймӑн,
Кӑлӑхах ҫатӑлтатан.
Ку чухне, асту, такамӑн
Сӗреки те капронтан.

Ман чӗре те пырса лекрӗ
Юрату сӗрекине.
Ҫук, татма вӑй ҫитеймерӗ
Ун чӑлханнӑ ҫиппине.

Юрату иккен хăватлă,
Вăл этем чунне илет.
Кăмăлăм — пĕрре çунатлă,
Тепĕр чух йĕрес килет.

Вăл та пулĕ, ку та пулĕ,
Паллă мар пĕр çак кăна:
Сăтăрçă е чăн-чăн пулăç
Тыткăнларĕ ман чуна!

## Кушак çăварĕнчен хăтăлнă шăши

(Юптару)

Кушак çури пур пирĕн... Пит хитре...
Шăши вăл тытрĕ пĕрреччен пӳртре.

Ярать те урайне... самант сиксе ӳкет,
Шăши каллех ун çăварне лекет.

Ăçта-ши чунĕ çылăхлă Шăшин!
Кăшлатчĕ-ха миххе... Çакланчĕ тин!

Тинех ак çитрĕ кирлĕ тавăру,
Майлашăнать эппин лару-тăру.

Йăпанчĕ чылайччен айван çура,—
Тӳрех хыпса çăтас-мĕн ун вăрра.

Кушак — çура кăна, вăл чее мар:
Шăшийĕ пĕчĕк те... анчах вăр-вар!

Вăл асăрханă хушăк пуррине,—
Кушак курса та юлаймарĕ хӳрине.

Мораль кивви: ан пул Кушак çури!
Эс унсăрăн — чее Шăши хурри.

## Ят

Çыртарнă ашшĕ ят хăй ывăлне,
Çапла тултарнă тунсăх кăмăлне.

«Сергей Степанччă»,— чĕннĕ хушăран
Хăй шĕвĕрне янравлă ик ятран.

Туллин чĕнсе юратнă ачине
Вăл вĕçĕхтернĕ кӳршĕ-аршине.

Халь ашшĕ шур сухаллă та курпун,
Ачи хăй вырăнне вăй илнĕ ун.

Паян вăл чĕлтĕр-чĕлтĕр шĕвĕр мар,—
Упа пек паттăр ÿссе çитнĕ ар.

Анчах та, темшĕн, чĕнессе кăна...
«Черкке Стакканччă»,— теççĕ халь ăна.

## Çĕнĕ «Çăлтăр»

Кам спортсмен!
Така Иванĕ!
Кам артист!
Каллех вăлах.
Кам вăл талантсен тăванĕ!
Ма çапла çÿрет юмах!

Çук, йăтса курман вăл штанга,
Нихăçан ринга тухман.
Килĕнче те вутă-шанкă
Ĕмĕрне те вăл çурман.

Ма артист Така Иванĕ!
Тен, чăнах ăста юрлать!
Концертра ялйыш курман-и!
Тен, паян-ыран курать!

Çутçанталăкăн чăн тусĕ
Кам!
Каллех, ара, Иван.
Хăй кÿмен çур пуслăх усă,
Пĕр хунав лартса курман.

Çĕнĕ çăлтăр, тен, хĕмленчĕ!
Çывăрса ан юл, тĕнче!
Палăрать-мĕн ун таланчĕ...
Телевизор умĕнче.

## Мăн ачасен сăввисем

### 1. Кăсăя

— Чи-чи, Кăсăя!
Ăçта каян Кăсăя!
— Хире, тырă вăрлама,
«Волга» валли мул пухма.

— Председатель çаклатсан!
— Ман хăта вăл — хăтăлăп.
— Е хуралçă тĕл пулсан!
— Çур литрлăх кăларăп.
— Е пухура хĕртсессĕн!
— Выговорпа çăлăнăп.
— Иккĕмĕш хут лексессĕн!
— Сăмах парăп — йăлăнăп.
— «Каçару çук», тесессĕн!
— Арăм патне таврăнăп.
Ун тăванĕ — аслăрах,
Манăннинчен ăслăрах.

## 2. Качака

— Кач-кач Качака,
Ылтăн-кĕмĕл мăйрака,
Ӳтӳ пăхма — тачăка,—
Ма салху эс, Качака!

— Манăн мĕншĕн савăнас!
Мана хуçа юратмасть.
Кăмăллать вăл ĕнене,
Пăлан евĕр кĕсмене.
«Сĕт сахал паратăн»,— тет,
«Йывăçа кăшлатăн»,— тет.
Халь сыхлатăп купăста,—
Ку ĕçе эп пит ăста.
Ăмсанаççĕ тăшмансем,
Кун памаççĕ ăнмансем.
«Капкăна» çити çăхав
Ман çинчен çыраççĕ, ав!

## 3. Шăши хуйхи

— Ма йĕретĕн, Шăши тус!
Тарăхасшăн пуç ан ус!
Тен, хăратăн Кушакран!
Е лекмерĕ куршакран!

— Кушакран тарса кĕмешкĕн
Пирĕн шăтăк тĕплĕ, кур.
Выçă мар-ха, астивмешкĕн
Складра пыл та, çу та пур.

Кирлĕ чухлĕ çеç илетпĕр
Кĕрпине те тыррине.
Усал ят çапах илтетпĕр —
Тухма намăс çын çине.

Ик уралисем йăтаççĕ
Михĕпе те чĕреспе.
Ман çине йăвантараççĕ
Тĕрĕслевçĕ килеспе.

# КĔСКЕН

## Тӳррĕн калакан—
## тăванне юраман

Вăрра хăй ячĕпе чĕнсен —
Сана вăл тем тума та хатĕр:
Чĕрре кĕрсе, вĕриленсе
Хăвнах сăлтавсăр шар кăтартĕ.

Чăркăшланать кахал тесен
Пĕр-пĕр услап та. Питĕ вирлĕн
Касса та татĕ çак кĕсен:
«Ĕçе тухмашкăн эпĕ чирлĕ!»

Эс тепĕр чух илтен:
Юлташăм,
Критикленишĕн эп хавас...
Хăй чĕререн çиленнĕ куншăн,
Шутлать: «Епле-ши тавăрас!»

## Фактпа справка

Хут-Справкăна свидетеле чĕнтернĕ.
Вăл çирĕплетнĕ:
— Ман хуçа ĕçчен...
Илсе тухса судри тенкел çинчен
Хисеп хăми çине хуть ларт ăна эс,— тенĕ.

Анчах та Факт та ларнă юнашар:
Пичетлĕ çав хута вăл хирĕçленĕ:
— Çынни — чипер, алли ун — кукăр,— тенĕ...
Мĕнех-ха Справка!
Тӳснĕ.
Хут — çын мар.

## Шăшипе роман

Шăши алçырăвне тиркенĕ
Çырсассăн «Шăнкăрав» роман.
Редактор:
«Ячĕ лайăх, — тенĕ, —
Кушак мăйне çеç çыхайман.

## Ҫашкӑрпа путек

**Каланӑ Путеке Выҫ Кашкӑр:**
**— Сана ҫиетӗп. Эп манман:**
**Мультфильм курнӑ чух сӑлтавсӑр**
**Манран эс кулнӑччӗ, ӑнман!**

❋

## Асаттесен шкулӗ

**Аван—аван, начар—начар,—**
**Кашнинщӗн паллӑ пулӗ.**
**Тӗнчешӗн пӗртте ҫӗнӗ мар,—**
**Асаттесен-ҫке шкулӗ.**

**Ача чухнех вӗсем пире,**
**Ҫав урока памашкӑн,**
**Йӗм антарса, ӳте-тире**
**Пӗҫертнӗ: «Пӗл, ан ашкӑн!»**

**Вӗрентнӗ: «Пуҫ пӗк ваттине!**
**Пул ырӑ чунлӑ, тӳрӗ.**
**Ан кӳрентер кӗҫӗннине,**
**Тивсен — усал ят ҫӳрӗ.**

**Ан кӗр ют пахчана вӑрра,**
**Куштан ан пул, ан ҫапӑҫ.**
**Ку—пит начар йӑла вара,**
**Куштан ҫын — ҫӳпӗ-ҫапӑ».**

**Ватти хутла пӗлмен пачах,**
**Ёмри иртейнӗ майӑн:**
**«Аван—аван, начар—начар...»**
**Ҫакна вӑл пӗлнӗ лайӑх.**

**Хӑй евӗр — пӗчӗк мӑнукне**
**Вӗрентнӗ тимлӗн, ӑслӑн.**
**Манман леш ӑслӑ ваттине,**
**Ёҫне черетлӗн тӑснӑ.**

**Ку чух тӑнлатпӑр тӗнчене:**
**Унта-кунта — юн, вилӗм.**
**Ваттисене, вӗттисене**
**Кӳрет шар вӑрҫӑ ҫилӗ.**

**Мӗскер вӑл пӗчӗк ҫын! Тӗнче,**
**Этемлӗх хӑй те кӑлӑх**
**Пӗр пысӑк тупӑк ӑшӗнче**
**Выртас самант та — чӑнлӑх.**

Кам ашкăнать çак тĕнчере!
Кам чунĕ ăссиленнĕ!
Ку чух çав шухă чĕмере
Чи аслă шкул пĕтернĕ.

Вăл атома пĕлет ватма,
Вăл — йăпăлти чĕлхеллĕ.
Ăста хăй вилĕм çеç акма,
Çав суккăр чунлă сĕлĕх.

Пулайтăр пилсĕр çын ăсчах,
Вăл — тискер кайăк чунлă.
Ун ăсĕ — çур пуса анчах,
Алли — хĕп-хĕрлĕ юнлă.

Вăл çăлтăра та кашкăрла
Ярса илмешкĕн хатĕр.
Хăех: «Хурах! — тет, кăшкăрать, —
Мире сыхлар,— тет,— атьăр!»

«Кам урапи çинче ларан,
Ун майлă юрлăн»,— тенĕ.
Вăл НАТО шайккинче, ара,
Унта ир-кас йӳтенĕ.

Çав шайккă вăрă-хурахла
Çӳрет ку чух Çĕр çийĕн.
Мĕнле калас-ха урăхла!
Усал йăла вăл — çилĕм.

Аванпала Начар шкулне
Иртмен вăл. Мĕскĕн, чухăн.
Хуппанă кĕвĕç халь чунне.
Анне-çĕр! Пул эс сыхă!

Пӳл ăссăр ывăл-хĕр çулне,
Кала ăна: «Тăна кĕр!»
Асаттесен ансат шкулне
Лартса вĕрент, Анне-Çĕр!

❋

# ТУППМАЛЛИ

**Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИ**

Укçа . . . . . . . . . . 3
Куршанак . . . . . . . 4
Пĕр самантрах . . . . . . 6
Сан ĕçӳ мар . . . . . . . 7
Икĕ усăллă ĕç . . . . —
Арпус . . . . . . . . . 8
Эх, мăнукăм . . . . . . . —
Çырăнмаллах пуль . . . . —
Калля пичче култарать . . . 9
Пĕрле хушса шутласан . . —
Эпир ӳстерен тĕлĕнтермĕшсем —
Ак, тамаша . . . . . . . . 10
Çич хуралла лаша . . . . 13
Пур-ха вĕсем . . . . . . . 16
Пушарник сăмахĕ . . . . —
Санюкпала Михала . . . . 17
Кала . . . . . . . . . —
Укахви . . . . . . . . . 18
Ялта кĕтетчĕç агроном . . . 19
Ахăлтатса хĕвел кулать . . . . —
Кĕрхи шăна . . . . . . . —
Çăхавçă . . . . . . . . . 20
Тăмана . . . . . . . . —
Кун вĕçленчĕ пулмалла . . —
Кĕмĕл çăпала . . . . . . 21
Санюк Саньки кăна выртать . 22
Пӳрнепе тĕллесе . . . . . —
Çитет! . . . . . . . . . . 23

**Матвей САКМАРОВ**

«Пшик» çыртăм . . . . . . 25
Хăй ирĕкĕпе чĕлхесĕрленнĕ
этем . . . . . . . . . 26
Элекçĕ . . . . . . . . . 28
Радиоевчĕ . . . . . . . 29
Макçăм мучи тивлечĕ . . . 30
Ĕнсерен панă преми . . . . 31
Шăлĕ витменнипе . . . . 32
«Жигули туянаймарĕ . . . 34
Тупсăмне тупасшăн . . . . 35
Тавçăрулăх . . . . . . . —
Ерçӳсĕр çын . . . . . . . 36
Çуллă пăтă . . . . . . . —
Меслетне пĕлмелле . . . . —
Чăрăш тăрринчи вăрăмтунасем 37
Хӳри вĕçне туй килсен . . . 37
Шыракан—тупать . . . . 41

**Анатолий ЮМАН**

Ыратман пуçа—тимĕр тукмак . 47
Улах саланчĕ . . . . . . 48
Куçлăх . . . . . . . . . 50
Милĕк . . . . . . . . . 51
Ик уралла упа . . . . . . 53
Мерттелле . . . . . . . . 54
Коллекционер . . . . . . 55
Сĕреке . . . . . . . . . 56
Кушак çăварĕнчен хăтăлнă
шăши . . . . . . . . 57
Ят . . . . . . . . . . —
Çĕнĕ «Çăлтăр» . . . . . 58
Мăн ачасен сăввисем . . . —
Кĕскен . . . . . . . . . 60
Асаттесен шкулĕ . . . . . 61

«БИБЛИОТЕКА КАПКАНА» № 4(73)

Василий Иванович ДАВЫДОВ-АНАТРИ

Матвей Алексеевич САКМАРОВ

Анатолий Федорович ЕРМИЛОВ-ЮМАН

# БЕСШАБАШНЫЕ

Рассказы, стихи,
пьесы, шутки
На чувашском языке

Редактор А. А. ГАЛКИН

Тех. редактор Н. С. ОРЛОВА

Корректор Е. С. ТИХОНОВА

НТ 01372. Сдано в набор 20.10.86. Подписано к печати 11.12.86.
Формат 84х108 1/32. Объем 3,5 уч. изд. л. Заказ 6330.
Тираж 24 000 экз. Цена 15 коп.

Типография издательства Чувашского обкома КПСС,
г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.

Хакě 15 пус
Индекс 73990

25 1 0